чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

ШĂМАТ КУН
2014, утă /июль/
19

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

139-140 /26545-26546/ № № Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Транспорт

## Çăмăллăхпа усă курма пĕлмелле

*Шупашкарăн Атăл леш енчи поселокĕсенче пурăнакансем юн кун республика Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă чух нумай ыйту çĕкленĕ.*

Пĕр пенсионерка «Чăвашавтотранс» предприятин 204-мĕш автобусĕпе Сосновка-Шупашкар маршрутпа çул çӳренĕшĕн пассажирсен пĕр пайне – 20, теприне 80 тенкĕ тӳлеттернине пĕлтернĕ. «Хак мĕншĕн пĕрешкел мар?» – пĕлесшĕн пулнă вăл.

Кĕçнерни кун ку ыйтăва «Чăвашавтотранс» предприяти директорĕ Евгений Мореплавцев уçăмлатрĕ:

– Шупашкарпа спутник хулана Атăл леш енчи поселоксемпе «Чăвашавтотрансăн» Çĕнĕ Шупашкар-«Чăваш Ен» санатори, Шупашкар-Сосновка тата Жуков предпринимателĕн 333-мĕш маршручĕсем çыхăнтараççĕ, – терĕ Евгений Юрьевич. – Пирĕн автобуссем республика чиккинчи Çурçĕр поселокне кунне уллтă хутлаççĕ. Вĕсемпе патшалăх çăмăллăхçисен нумай категорийĕ усă курать. Республикăн Министрсен Кабинечĕн 2013 çулхи раштавăн 31-мĕшĕнчи «Чăваш Республикин территорийĕнче пурте усă куракан транспортпа çул çӳренĕшĕн татăлмалли карттăсем çинчен» 566-мĕш йышăнăвĕнче çав категорисен перечение палăртнă. Унта кĕртнĕ çăмăллăхçăсем пирĕн транспортра харпăр хăйĕн карттине кондуктор аллинчи терминал çине хурса çул çӳревĕшĕн татăлаççĕ. Çăмăллăхпа усă курма Шупашкарти ятарлă пункта çитсе уйăхсерен 600 тенкĕ тӳлемелле. Карттă алăра пулсан тата укçа хывсан пирĕн транспорта кунне темиçе хут та ларма пултаратăр. Чăн та, «Чăвашавтотранс» автобусĕсемпе Атăл леш енче пурăнакансен пĕр пайĕ Сосновка-Шупашкар маршрутпа 20 тенкĕ çеç тӳлесе çӳрет. Шупашкар хула депутачĕсен Пухăвĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче 204-мĕш маршрут тăкакĕн пĕр пайне компенсацилемешкĕн тĕп хула бюджечĕнчен укçа уйăрса субсидилеме йышăннă. «Чăвашавтотранспа» администраци килĕшӳ çирĕплетнĕ. Çăмăллăхпа усă куракансен перечение Шупашкарăн Атăл леш енчи территори ертӳлĕхĕ çирĕплетет. Унта кĕрекен категорисем те автобуссенче карттăпа татăлаççĕ. Çӳлте асăннă икĕ тĕрлĕ перечене кĕмен пассажирсем çын пуçне Сосновка-Шупашкар маршрутпа çул çӳренĕшĕн 80 тенкĕ тӳлеççĕ. Республика Пуçлăхĕпе тĕл пулнă чух ыйту паракан, тен, патшалăх çăмăллăхçисен йышĕнчех. Анчах пирĕн оператортан карттă илмен, транспортпа çӳренĕшĕн 600 тенкĕ тӳлесе хуман. Кондуктора нимле документ та, карттă та кăтартман. Паллах, вăл патшалăх çăмăллăхçи пулнине çирĕплетме пултарайман. Çавăнпа кондуктор унтан 80 тенкĕ илнĕ.

**Сергей МИХЕЕВ**

Асăрханăр!

# Шыв çăмăлттайлăха каçармасть

*Çуллахи шăрăх вăхăтра чылайăшĕ шыв хĕррине канма, унта иссе-чăмпăлтатса кĕлеткине уçăлтарма тăрăшать. Çапах кӳлĕ, пĕве, юхан шыв тавраш – илĕртмĕш çеç мар, этам сывлăхĕпе пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратма пултаракан вырăн та. "Шывăн турачĕ çук" тесе ахальтен каламаççĕ.*



### Пляжра аванрах

Кăçал республикăри шыв объекчĕсенче 26 пăтăрмах тухнă, 20 çын вилнĕ /çав шутра 7 ача/, 8-шне çăлма май килнĕ. Инкек ытларах ятарласа кану валли хатĕрлемен вырăнсенче пулнă. Çăлавçăсем палăртнă тăрăх – путакансенчен ытларахăшĕ пĕве е юхан шыв хĕррине киличчен е унта алкоголь шĕвекĕ ĕçнĕ. Ачасем вара аслисем асăрхаса çитерейменрен шар кураççĕ. Акă Çĕмĕрлере тата Сĕнтĕрвăрри районĕнче тухнă инкексенче ашшĕ-амăшĕ те юнашарах пулнă, вĕсем



Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА сăн ӳкерчĕкĕсем

хăйсен ĕçĕсемпе аппаланнă хушăра пепкисем путса вилнĕ. Çăлавçăсем çынсене хăйсем лайăх пĕлекен вырăнта çеç шыва кĕме сĕнеççĕ. Кану валли официаллă майпа уçнă пляжсене суйласан аванрах теççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсене пурне те водолазсем тĕрĕсленĕ, шыв санитарипе микробиологи кăтартăвĕсем тăрăх хăрушсăр пулнине çирĕплетекен документсем те пур. Официаллă майпа уçнăскерсене çăлав тата медицина посчĕсем йĕркеленĕ, çăлав хатĕрĕсемлĕ щит тата канакансем валли информаци стенчĕ /пляж ячĕ, ĕç вăхăчĕ, сывлăш тата температура кăтартăвĕсем/ вырнаçтарнă, ишме-чăмпăлтатма юракан вырăна буексемпе палăртнă. Хальхи вăхăтра пирĕн республикăра 15 пляж ĕçлет: вĕсенчен 8-шĕ – Шупашкарта, 3-шĕ – Етĕрне районĕнче, 2-шĕ – Сĕнтĕрвăрри хулинче, Çĕнĕ Шупашкарпа Куславккара – 1-ер.

Ытти районта пурăнакансен вара ăçта шыва кĕмелле-ха? Федераци саккунĕсемпе тата Шыв кодексĕпе килĕшӳллĕн вырăнти хăй тытăмлăх ертӳçин хăйне шанса панă территоришĕн яваплă пулмалла, халăха хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессишĕн те унăнах тăрăшмалла. Çынсем шыва йышлăн кĕрекен вырăна тупса палăртсан пуçлăхăн ăна тасаттармалла, çăлавçăсен постне йĕркелемелле... Çапла тума май килмесен "Кунта шыва кĕме юрамасть!" тесе асăрхаттаракан паллăсем вырнаçтармалла. Унсăр пуçне ертӳçĕсен халăхпа профилактика калаçăвĕсем ирттермелле.

Пирĕн республикăра 3680 пĕве, кӳлĕ, юхан шыв. Вĕсенчен пысăк пайне нимĕнле оборудованипе те тивĕçтермен, тĕпне водолазсем тĕрĕслемен, çăлавçăсемпе медицина ĕçченĕсем те çук. "Эпĕ кунта яланах шыва кĕнĕ: халĕччен нимĕн те пулман, малашне те йĕркеллех пулĕ", – тесе чылайăшĕ пĕр шикленмесĕрех шыва сикет. Анчах ятарласа тĕрĕслеттермен пĕве-кӳлĕ тĕпĕнче темĕн те выртма пултарать: кирпĕч е кантăк ванчăкĕ, арматура, тимĕр-тăмăр... Вĕсене пырса тăрăнас тата аманас хăрушлăх пур.

### Муркаш районĕнчи пĕвесем

Муркаш районĕнче пурăнакансем ăçта канаççĕ, мĕнлерех вырăнсенче шыва кĕреççĕши? Çак ыйтусене уçăмлатас тесе çула тухрăмăр. "Ытти муниципалитет йĕркеленĕвĕ пекех эпир те ЧР Министрсен Кабинечĕн хушăвне – 2014 çулхи шыва кĕмелли тапхăра хатĕрлënесси çинчен – илтĕмĕр. Хушупа килĕшӳллĕн постановлени йышăнтăмăр. Тĕп тĕллевсенчен пĕри – водолазсене чĕнсе илсе çынсем йышлăн канакан пĕвесен тĕпне тĕрĕслеттерессиччĕ. Пирĕн районта шыв объекчĕ пĕтĕмпе 100 ытла, çав шутран 70-шĕ – пысăкраххисем. Çу уйăхĕн 24-мĕшĕнче ГКЧСран водолазсем килчĕç, вĕсем тĕрлĕ ял тăрăхĕнчи 13 пĕве /плотина/ тĕпĕсене тĕрĕслерĕç. Унтан ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем шыва кĕме юракан вырăнсене буексемпе палăртрĕç, информаци щичĕсем вырнаçтарчĕç. Ертӳçĕсемпе шыв объекчĕсенчи хăрушсăрлăх темипе темиçе канашлу та ирттертĕмĕр. Вĕсемпе пĕрле халăхра ăнлантару ĕçĕсем йĕркелетпĕр, шывра хăйсене мĕнле тытмаллине аса илтеретпĕр. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче пурăнакансем хастаррине палăртас килет. Унта кашни пĕве çумне яваплă çын çирĕплетнĕ: вăл çыран хĕррисенче тирпей-илем хуçалантăр тесе тăрăшать, пушар машинисене шыв илме меллĕ пултăр тесе сăнаса-тĕрĕслесе тăрать. Çавăн пекех Чуманкасси, Йӳçкасси ял тăрăхĕсем ку ыйтусемпе нумай ĕçленине палăртмалла", – вырăнти лару-тăрупа паллаштарчĕ райадминистрацин ятарлă программăсен уйрăмĕн пуçлăхĕ Геннадий Любимов.

9 стр.

# Атăл леш енчи çул çӳрев

*Юн кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкар хулин Атăл леш енчи территорийĕнче пулнă, Октябрьски, Сосновка, Первомайски тата Çурçĕр поселокĕсенчи лару-тăрупа паллашнă, унта пурăнакансемпе курнăçнă.*



Лавккасене кĕнĕ май Михаил Игнатьев унта хамăр патра туса кăларнă продукци пуррипе кăсăкланнă. «Пĕр лавкка та паянхи требованисене тивĕçтермест, çул хĕрринчи кафесен сетьне аталантарман. Хамăрăн ял хуçалăх продукцийĕн тӳпи пĕчĕк, вăл 50% кая мар пулмалла», – хакланă вăл курнине.

Сосновкăра ачасен тĕп площадкипе паллашнă. Кунта – çĕнĕ тренажерсем, вылямалли конструкцисем. 9-мĕш пушар чаçĕнче наряд вут-çулăмпа кĕрешме хатĕррине тĕрĕсленĕ. 2010 çулта çуннă вăрмансен лаптăкĕнче çĕнĕ хунавсем мĕнлерех çитĕннине хакланă. «Çуннă лаптăксен 80% тасатнă, 2015 çулта ку ĕçе вĕçлемелле. Виçĕ çул каялла лартнă хунавсем япăх мар çитĕнеççĕ, анчах çанталăк типĕ тăнине кура кăçал лартнисемшĕн хăрушлăх пур – хушма укçа уйăрмалла», – тенĕ Михаил Васильевич.

Çул çӳреве пĕтĕмлетнĕ май Атăл леш енчи территорисене аталантарма çуллен укçа уйăрнине палăртнă. Тĕп тĕллев – предпринимательлĕхе аталантарасси, кунти çĕр ресурсĕсемпе тухăçлă усă курасси, çынсен пурнăç шайне çĕклесси.

■ К.НИКИТИН

# «Çухалнă» çĕр,
## е Толстой урамĕнчи манăçнă çынсем

*Истори çĕршĕн пысăк вăрçăсем пуçланнă тĕслĕхсене те пĕлет. Çапла, çĕр яланах тавлаштарать – ырă кӳршĕсем те хирĕçсе каяççĕ. Шупашкарта пурăнакан Валерий Сабаев вара хула администрацийĕпе тавлашать – çĕре пулах.*

Хăй вăл Патăрьел районĕнчен – Вăтаел ялĕнче çуралнă. Анчах çемье Шупашкара куçса килнĕ, амăшĕ, Вера Сабаева /каярахпа хушаматне улăштарнă – Тихонова пулса тăнă/ Киров поселокĕ текен районти Толстой урамĕ, 44 адреспа уйрăм çурт туяннă. Вера Михайловна çĕре кĕрсен хайхи çурта ывăлĕ Валерий Анатольевич еткер шучĕпе йышăннă. Тĕрĕссипе, хĕрарăм ăна тепĕр ывăлне халалласа хăварнă-ха, анчах лешĕ пурлăха хăйĕн харпăрлăхне куçарас темен, вăл килĕшнипе çурт пиччĕшĕн пулса тăнă – çакна суд йышăнăвĕпех çирĕплетнĕ.

Халĕччен йĕркеллех пулнă темелле. Валерий Анатольевичăн амăшĕ çак çурта унччени хуçинчен 1978 çулта туяннине çирĕплетекен килĕшӳ те, техника инвентаризацийĕн бюровĕнчен илнĕ хутсем те, çурт кĕнеки те /унта В.Сабаев çакăнта прописка тăнине те кăтартнă/, ытти те – пĕтĕмпех пур. Хуçалăх лаптăкĕ-вырнаçăвĕ тĕлĕшпе иккĕленӳ пулма та пултарайман темелле. Халĕччен çапла пулнă...

– Йĕркене пăхăнса лаптăка чикĕленине çирĕплетес терĕм, – каласа парать Валерий Анатольевич. – Кайрăм та – мана кадастр планне кăтартаççĕ. Тĕлĕнсех кайрăм: манăн 9 соткăллă лаптăк пĕр кĕтесĕнчен самай пĕчĕкленнĕ, ăна касса илсе кӳршĕ лаптăк çумне хушса хунă!

Кӳршĕллĕ лаптăк тенĕрен, унăн историйĕ чăннипех хăйне евĕрлĕ. Толстой урамĕ, 42 – çак адреспа пурăннă Валерий Г.-на В.Сабаев лайăх пĕлнĕ. Вăл тĕрмере чылай çул ларнă. «Кӳршĕ вĕт – хĕрхентĕм, пенсине те пĕр вăхăт манăн Шупашкарти хваттер адресĕпе илсе пурăнчĕ», – аса илет Валерий Анатольевич. Г. пурăнмасть ĕнтĕ, çĕре кĕнĕ. Унăн çурчĕ те çунса кайнă. Çурт-хуçалăх документĕсем В.Сабаев аллинче пулнă та – çав хутсене те вăл Г.-н Наташа ятлă тăванне парса янă. Хĕрарăм çĕре те сутса янă – Валерий Анатольевич лайăх пĕлмест. Çакă çеç паллă: çав лаптăк чылай çул пушă ĕнтĕ – хайхи Наташа та, çĕнĕ хуçа та килни-тунине асăрхаман. Хăйĕн çурчĕ патне кĕрсе çӳреме урăх çул та çук та – В.Сабаев ун урлă сукмак хывнă, усси – çакă çеç.

Халь вара çав лаптăк шутлама пултарайман çĕртен пысăкланнă пулса тухать. Интереслĕнне май кӳрши çакна та пĕлнĕ: 42-мĕш çурт ларнă лаптăк хуçи паян уйрăм çын мар иккен – тĕп хула администрацийĕ. «Тĕрĕссипе, çав лаптăкпа хам чылай çул усă курнă май саккунпа килĕшӳллĕн ăна эпĕ те илме пултарнă ĕнтĕ, – сăмахне тăсать В.Сабаев. – Ку юрĕ-ха, мана ютти кирлĕ мар, анчах мĕнле майпа муниципалитет харпăрлăхне куçма пултарнă тата, чи кирли, мĕншĕн манăн лаптăкăн пĕр пайне «приватизациленĕ» – çакă тĕлĕнтерет».

Тĕрĕслĕх шырать. Лаптăкăн «катăлнă» пайĕ хăйĕн пулнине ĕнентермешкĕн унăн халь кӳршĕ хуçалăх хуçин /вăл вилнĕ терĕмĕр/ тăванĕсене шыраса тупмалла иккен, хаçатра пĕлтерӳ памалла – тăкак вĕт. Анчах çак ĕçсене мĕншĕн хула администрацийĕ хăй маларах туман, лаптăка хуçи-мĕнĕсĕрех ярса илнĕ те муниципалитетăн туса хунă? Ыйтăвĕ нумай, хуравĕсем кăна çук.

Парăнасшăн мар-ха Валерий Анатольевич, тĕрĕслĕх тупатăпах тет – администрацие те, прокуратурăна та çитесшĕн. Влаç тенĕрен, ăна ӳпкелемелли татах та пур унăн. Толстой урамĕ пирки тĕп хула центрĕ темелле ĕнтĕ, чăннипе вара – манăçнă кĕтес. Пысăк пуçлăхсен машинисем унтан иртсе çӳремеççĕ вĕт – алă сулнă, никама та кирлĕ мар.

– Унта кĕрсе-тухса çӳремелли çула тирпейлеме миçе çул тархаслатпăр – кăлăхах, – пăшăрханса калаçать В.Сабаев. – Çав урамра тĕпрен илсен ватăсем, инвалидсем пурăнаççĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем те пур – влаçсем пур пĕр хăлхана чикмеççĕ.

21-мĕш çурт патĕнчен пуçласа 31-мĕш патне çитиччен самай чăнкă «тăвайккипе» аялалла анмалла та – васкавлă медпулăшу машинисем те пырасшăн мар. Чирлисене наçилккепе çуран йăтса тухни те пĕрре кăна мар пулнă. Пушар машинисемшĕн те – чăрмавлă. Урам вĕçĕнчи 40, 42-мĕш çуртсем çунса кайнă – пушар машинисем çывăха пырайман. Урамра пурăнакансем çула йĕркене кĕртмешкĕн хăйсем те укçа пухса пулăшмашкăн хатĕр – çук, пур пĕр лав вырăнтан хускалмасть. Район администрацийĕн пĕр хурав: «Кăçалхи бюджетра Толстой урамĕнче çул тумашкăн укçа уйăрма пăхман...»

■ Николай КОНОВАЛОВ

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче кăларнă 105-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн театр искусствин аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, пултарулăхра тата педагогикăра нумай çул ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин аслă професси вĕрентĕвĕн «Чăваш патшалăх культурăпа искусство институчĕ» бюджет учрежденийĕн профессорне, кафедра заведующине **Николай Данилович ГРИГОРЬЕВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМĔНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН»** орден медалĕпе наградăланă;

педагогикăри тата воспитани енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн, нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи муниципалитетăн пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан «46-мĕш гимнази» бюджет учрежденийĕн директорне **Галина Александровна ГРАЧА – «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНТĔВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»,** Шупашкар хулинчи муниципалитетăн пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан «Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 38-мĕш вăтам шкул» бюджет учрежденийĕн вĕрентекенне **Елена Флегонтовна АРХИПОВĂНА**, Чăваш Республикин вăтам професси вĕрентĕвĕн «Шупашкарти электромеханика колледжĕ» бюджет учрежденийĕн преподавательне **Татьяна Сергеевна КОРЕНКОВĂНА,** Чăваш Республикин вăтам професси вĕрентĕвĕн «Канашри педагогика колледжĕ» автономи учрежденийĕн преподавательне **Раиса Григорьевна СЕРГЕЕВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВĔРЕНТЕКЕНĔ»** хисеплĕ ятсем панă;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи тулли мар яваплă «Яхтинг» обществăн раскрой цехĕн аслă мастерне **Валентина Семеновна МИДАКОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

строительствăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи тулли мар яваплă «Тимĕр-бетон конструкцисем 9 №» обществăн генеральнăй директорĕн производство енĕпе ĕçлекен çумне **Петр Андреевич МИХАЙЛОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ СТРОИТЕЛĔ»** хисеплĕ ят панă;

вырăнти хăй тытăмлăх аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хула администрацийĕн архитектура тата хула тăвас ĕç управленийĕн пайĕн пуçлăхне **Лариса Германовна НИКИТИНĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНĔСЕНЧЕ ТӲРĔ КĂМĂЛПА ĔÇЛЕНĔШĔН»** Мухтав паллипе наградăланă.

## Историйĕ пуян, аталанăвĕ курăмлă

*Потребительсен кооперацийĕн кунне кăçал утă уйăхĕн пуçламăшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнче уйрăмах анлăн паллă тунă. Çак уявра нумай пулмасть 90 çул тултарнă Октябрьски райпоне те чысланă.*

Юбилярăн историйĕ пуян, аталану çулĕ сулмаклă: Выççăлккă Тукай (халĕ Октябрьски) ял çыннисен пĕрлехи пухăвĕн йышăнăвĕпе йĕркеленĕ "Шанчăк" ушкăнран вăл нумай отрасльлĕ хуçалăх комплексĕ таран ӳснĕ, паянхи кун пĕтĕм район территорийĕнче суту-илӳ, общепит, хатĕрлев, производство, пулăшу ĕçĕсене йĕркелесе тăрать.

Сĕнтĕрвăрри хулинче иртнĕ уява халăх йышлă пухăннă. Юбилейпе тата профессии уявĕпе Октябрьски райповĕн ĕçченĕсене Чăвашпотребсоюз Канашĕн председателĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Павлов, Сĕнтĕрвăрри районĕн пуçлăхĕ В.Морозов, райадминистраци пуçлăхĕ В.Григорьев, райпо канашĕн председателĕ Р.Почемов, ыттисем саламланă. Тухса калаçакансем потребительсен общество районăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пысăк тӳпе хывнине палăртнă.

А. ЛУКИЯНОВА.

*Шухăшлаттаракан çыру*

# Пулă пусĕнчен çĕрет

*Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуç ялĕнче выльăх-чĕрлĕх йышĕ самаях чакрĕ. Çапах та темиçе ĕне-вăкăр усракан хуçалăх çук мар. Паллах, çакă савăнтарать.*



Ялти чи пысăк хуçалăхсенчен пĕри вăл – В.Кириллов килĕ. Майракаллă шултра выльăх нумай вĕсен: ĕне, пăру... Кĕтӳ пухмалăх та пур. Каçсерен вĕсем ял варрипе ирĕккĕн çӳреççĕ.

Ĕлĕк аш-какай сутма Хусана çӳрекеленĕ. Паян пысăк ыйту мар ку – шăнкăравла та усламçăсем хăйсемех килсе илеççĕ. В.Кириллов та вĕсен пулăшăвĕпе усă курать. Нумаях пулмасть çакскер витери чи кĕрнеклĕ вăкăрне сутрĕ. Выльăха пахчарах пусса тирпейлерĕç. Анчах та çак ĕç хыççăн кӳршисен темиçе кун, тен, ытларах та, пĕр ӳкерчĕке курма тивет: унтах пăрахса хăварнă пыршă-пакарта çийĕн шăна-пăван явăнать, сăмсана усал шăршă кĕрет, йыткачка каллĕ-маллĕ чупкалать. Кăштахран хуçа тепĕр вăкăрне пусса сутрĕ. Ĕç хыççăн каллех – çӳлерех асăннă ӳкерчĕк. В.Кириллов – Шĕнерпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ. Акă ăçтан пуçланать ял тирпейсĕрлĕхĕ.

У.ПĂЛХАР.

02 служба

# Преступлени сахалрах пулин те...

***ЧР Шалти ĕçсен министерствин ертӳçи кашни çур çулта анлă пресс-конференци йĕркелесси йăлана кĕчĕ. Юн кун Сергей СЕМЕНОВ министр журналистсемпе черетлĕ тĕл пулу ирттерчĕ.***

### Статистика суймасть

Паллах, полици ĕçне хаклामашкăн чылай цифра асăнма тивет. Сергей Евстафиевич криминал статистикипе тĕплĕ паллаштарчĕ. Çулталăкăн пĕрремĕш çурринче шалти ĕçсен органĕсем тĕрлĕ преступленипе пăтăрмах тĕлĕшпе 148 пин заявленипе пĕлтерĕве регистрациленĕ. Ку пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 3,4% нумайрах. Çав вăхăтрах преступленисен шучĕ 12,6% чакнă – 6,9 пине яхăн. Çак шутра уçса панисен тӳпи – 69,8%.

Çурринчен ытларах – йывăр мар преступленисем. Министр шухăшĕпе – çавнашкаллисене ытларах тупса палăртни йывăр преступленисенчен сыхланма пулăшать. Апла пулин те 161 çын вилни, 193 çын сывлăхне йывăр сиен кӳни тата та çине тăрарах ĕçлеме хистет.

Çынсем ĕçкĕпе иртĕхни çавçавах пăшăрхантарать. Çын вĕлернĕ тĕслĕхсен 95,5, сывлăха йывăр сиен кӳнин 90,7% – ӳсĕрле тунă преступленисем. Пĕтĕмĕшле илсен те мĕн пур преступленин 43,2% – «ӳсĕр» тĕслĕхсем. Ку енĕпе эпир Атăлçи округĕнче кăна мар, Раççейре те «малтисен» шутĕнче-мĕн.

Экстремизм пирки те сăмах пычĕ – 9 преступление шута илнĕ. Вĕсем темле чăрсăр тĕслĕхсем мар, анлă акцисемпе çыхăнман. Тĕпрен илсен – çамрăксем Интернетра раса курайманлăхĕн идеологине тĕпе хуракан материалсем сарни. Министр ку енĕпе профилактика ĕçне ирттерни çинчен те каларĕ: «Çынсемпе ĕçлетпĕр. Протестлеме никама та чарман – майсем пур, анчах чикĕ урлă каçма юрамасть».

Преступниксен каварлашнă ушкăнĕсем тĕлĕшпе уголовлă 162 ĕç пуçарнă. Вĕсен 47 членне, çав шутра 6 лидерĕпе йĕркелӳçине суд умне тăратнă. Наркотиксемпе çыхăннă 441 преступление тăрă шыв çине кăларнă. Ку енĕпе Наркотĕрĕслев службипе аллаллăн ĕçлеççĕ те – çак çыхăну тухăçлăхне ĕнентерекен тĕслĕх нумай.

Суя укçапа усă курнипе çыхăннă преступленисене тупса палăртас, айăплисене явап тыттарас енĕпе те ĕç курăмлă. Генерал çакнашкал «бизнеспа» хамăрăн ентешсем мар, ютран килекен çынсем аппаланнине палăртрĕ. Çавăн пекех хваттерсене çаратас тĕлĕшпе те «гастролерсем» ытларах пăшăрхантараççĕ-мĕн.

Коррупци тĕслĕхĕсем – 256. Çав шутра 100 преступлени – взятка илнипе çыхăннисем. Министр çулсем çинчи лару-тăру темине те пайăррăн çĕклерĕ: «Чылай çул аварисен шучĕ ӳссе пычĕ. Çавна май пирĕн ПАИ сотрудникĕсен ĕç режимне те улăштарма тиврĕ – палăртнинчен ытларах ĕçлеççĕ. Çакă пулăшрĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан кăçалхи кăрлач-çĕртме уйăхĕсенче аварисен шутне 8,3% чакарма май килчĕ. Вĕсенче 98 çын вилнĕ – çак кăтарту та 7,5% чакнă, суранланнисен шучĕ те 15,7% пĕчĕкленнĕ». Çапах çынсем руль умне ӳсĕрле ларнă тĕслĕх нумайййи питĕ пăшăрхантарать – кунашкаллишĕн 2,9 пин ытла çынна тытса чарнă. Çул-йĕр правилисене пăснин фотофиксаци приборĕсемпе усă курса тупса палăртнă тĕслĕхĕсем 11% яхăн нумайланнă – 151 пин тĕслĕхе яхăн.

### Геройăн та саккуна пăхăнмалла

Журналистсем чи малтанах Раççей Геройне Евгений Борисова арестлени пирки ыйтни кĕтменлĕх пулмарĕ. Калаçтаракан тĕслĕх-çке. Аса илтерер: ăна саккуна пăсса астармăш вăйăсем йĕркеленĕшĕн айăплаççĕ. Вăрттăн çак бизнеса тĕп хулари полицин 4-мĕш пайĕн пуçлăхĕ Игорь Иванов хӳтĕленĕмĕн, 15 пин тенкĕ взятка та илнĕ имĕш.

Сергей Семенов татăклăн палăртрĕ: «Раççей Геройĕ-и, ахаль çын-и – пĕлтерĕшлĕ мар. Ĕç-хĕлĕ – саккунсăр. Вĕсем саккуна пăсние лайăх пĕлнĕ. Айăплă-и е айăпсăр-и – Следстви комитечĕ тĕпчесе çирĕплеттĕр. Уголовлă ĕçе эпир панă материалсем тăрăх пуçарнă, çав шутра – хамăрăн сотрудниксем тĕлĕшпе те».

Кунашкалли Патăрьеленче те пулнине аса илтернипе пĕрлех министр хальхи тĕслĕхе тăрă шыв çине кăларни тепĕр район полицийĕн пуçлăхĕн позицийĕпе çыхăнланнине ырласа палăртрĕ: «Унран та саккунсăр ĕç-хĕле хӳтĕлеме ыйтнă, укçа сĕннĕ. Вăл саккун хушнă пек тунă – çакăн çинчен тивĕçлĕ çĕре пĕлтернĕ. Çавăнпа та полицейскисем пурте хапсăнчăк тени вырăнсăр. Унашкаллисем, чăн та, пур, çакна йышăнмалла». Астармăш вăйăсем тенĕрен, халĕ вĕсемпе çыхăннă уголовлă виçĕ ĕçе тĕпчеççĕ, иккĕшне шăпах пакунлă çынсене взятка пама тăнă май тăрă шыв çине кăларнă – полицейскисем хăйсем пуçарнипе.

Пакунлă çынпах çыхăннă тепĕр тĕслĕх пирки те сăмах пулчĕ. Журналистсем каланă тăрăх – тĕп хулара пăтăрмах пулнă. Унта хутшăннă пĕр çамрăк ашшĕне шăнкăравланă, вăл вара полици подполковникĕ иккен. Арçын часах вырăна çитнĕ, ывăлне унтан илсе кайнă, ыттисене пăрахса хăварнă-мĕн... Министр ĕç-пуç урăхларах пулнине палăртрĕ. Чăнах та, подполковник, анчах вăл унта должноçри çын пек мар, çамрăк çын ашшĕ пулнипе пынă. Пăтăрмахĕ те ăна айăпламаллискер мар. «Хĕр велосипедпа пĕчĕк ачана пырса лектернĕ. Ачан ашшĕ урса кайнă – хайхи хĕре те, унпа пĕрле пулнă шкул ачине те /полицейски ывăлне/ лекнĕ – акă мĕн пирки калаçмалла, – терĕ Сергей Евстафиевич. – Паллах, пурин те хăйсене алăра тытмалла пулнă. Çав вырăна ДПС экипажĕ çитнĕ. Вăт вĕсене явап тыттаратпăр, мĕншĕн тесен ĕç-пуçа документсемпе кирлĕ пек çирĕплетмен, пăтăрмаха сирсе яман. Кунашкал тĕслĕхсенче мĕн чухлĕ çын – çавăн чухлĕ позици. Тĕрĕслĕхе тупма никам та чăрмантармасть, уголовлă ĕç пуçаратпăр пуль. Çамрăк çыннăн ашшĕн, подполковникĕн, айăпĕ пуррине палăртман».



### Пакун – хӳтлĕх мар

Полицейскисене хăйсене те çине-çинех лекет. Кăçал кăна пакунлă çынсене пăхăнманнин, вĕсем çине алă çĕкленин 600 яхăн тĕслĕхне шута илнĕ. Куншăн 109 çынна уголовлă майпа айăпланă ĕнтĕ, тата çавăн чухлĕн административлă майпа явап тытнă.

Апла пулин те министр полици хӳтлĕхсĕр тенипе килĕшмест. «Çапла, хĕç-пăшалпа усă курмалли тĕслĕхсенче – усă курман, çакна палăртмаллах. Хĕç-пăшала хута яма май пулнă тата юранă тĕслĕх – вун-вун, анчах полици хĕç-пăшалпа усă курни республикăра пĕрре те пулман. Кашни тĕслĕххех мĕн тумаллине полицейски хăй татса парать. Преступнике капла та тытса чарасси пирки иккĕленмест тĕк – усă курмасăр тĕрĕс тăвать. Пакунлă çын суранланнă, анчах преступнике тытса чарайман – кун пекки пĕрре те пулман. Мĕн пур преступление уçса панă. Çапла, пире хĕнеççĕ, анчах пур пĕр полицейски çĕнтерет, хăй вăй çитерейменчухне пулăшу вăхăтра çитет», – терĕ министр.

МИХсен представителĕсем нумаях пулмасть Çĕмĕрлере полицейски пĕчĕк ачана таптанипе кăсăкланчĕç. Сергей Семенов палăртнă тăрăх – руль умĕнче хĕрарăм сотрудник пулнă, ача пăхмалли отпускрискер. Хăйĕн ачи те пĕрле машинăра пулнă. Картишĕнче инкеке сирсе ярайман. Тĕрĕслев иртнĕ – сотрудник ӳсĕр пулман. «Ĕç-пуça ятарласах хутшăнмастпăр, – çирĕплетрĕ генерал. – Пирĕн унашкал право çук – следстви тĕпчесе хаклатăр».

Çур çулта полицейскисен айăпĕпе çулсем çинче 27 авари пулнă: «Пирĕн – 6,5 пин полицейски, çакăн чухлĕ ДТП нумай-и е сахал-и – хăвăр хаклăр». Кусем – асăрханманнипе пулакан тĕслĕхсем, вĕсемшĕн пакунлă çынсем саккунпа ыттисемпе тан явап тытаççĕ, çийĕнчен ШĔМ дисциплина енĕпе явап тыттарать. Кашни авари тĕлĕшпе тĕплĕ тĕрĕслев ирттереççĕ. Ӳсĕр пулсан е медицина тĕрĕслевне кайма хирĕçленĕ тĕк – «çийĕнчех ĕçрен хăтаратпăр». Çавнашкаллисем 12 тĕслĕх пулнă. Çынсем сиенленмен, транспорт хатĕрĕсем кăна ваннă – кун пек чухне те айăплă сотрудник çул-йĕр правилисен тĕлĕшпе экзамен çĕнĕрен тытать. Çулталăк хушшинче çул-йĕр правилисене икĕ хут сĕмсĕррĕн пăссан сотрудникăн ятарлă комисси умĕнче явап тытма тивĕ – службăпа сыв пуллашасси те часах. Хальлĕхе ун пекки пулман-ха.

Полицейскисене хваттерсемпе тивĕçтересси пирки каланă май 2012-2014 çулсенче 46 сотрудникне çурт-йĕр валли социаллă тӳлев пани пирки пĕлтерчĕ – пĕтĕмпе 110 млн тенкĕлĕх. Çавăн пекех 17 сотрудникне 30 млн тенкĕлĕх çурт-йĕр сертификачĕсем панă. Уйăх каялла ШĔМ тĕп хулара 63 хваттерлĕ çурт туса пĕтернĕ, эппин, çавăн чухлĕ çемье пурăнмалли кĕтеслĕ пулать.

Кадрсене илес тĕк – кăçал ЧР ШĔМне 112 кандидата йышăннă. Ĕçрен кайнисем – 111 çын /çав шутра – тĕрлĕ çитменлĕхшĕн кăларса янисем те/. Милицирен полици туса хунипе çыхăннă реформăн хăш-пĕр йăнăшне тӳрлетме тивнĕ. Çавна май икĕ çул хушшинче министерство тытăмĕнчи 202 сотрудникне районсен шайне куçарнă – унта ĕç калăпăшĕ чăннипех пысăк. Çакă та çителĕксĕр пулнă, икĕ эрне каялла тата 82 сотрудник ШĔМ тытăмĕнчен районсенчи пайсене куçнă.

Полицин çĕнĕ тумĕ те кăсăклантарчĕ: пĕрисем çĕннипе, теприсем киввипех-ха – мĕншĕн? Министр пĕлтернĕ тăрăх – хальлĕхе йышăн 35% çĕнĕ тум илнĕ. Вĕсем те – туллин мар, хăшĕсене хĕллехи форма панă, теприсене – çуллахи. Çакă чылайăшĕн унчченпанă тумтир кивелсе ĕлкĕреймённипе, çĕннине памалли вăхăт çитменнипе сăлтавланнă. Формăна туллин çĕнетессине 2016 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле. Çĕнĕ форма интересленреххи куç кĕрет – çĕнĕлĕх чылай. Тĕсĕ те – тĕттĕм кăвак: «Истори тĕсне тавăрнă, полици тумтирĕн тĕсĕ ĕлĕк шăпах тĕттĕм кăвак пулнă».

Украинăран килекенсем кунти лару-тăрăва çивĕчлетмĕç-и? Çук, министр кунта хăрушлăх курмасть. Çапах кӳршĕ çĕр-шывран Чăваш Ене криминалпа çыхăннă çынсем килесрен сыхланас енĕпе тивĕçлĕ ĕç пурнăçлаççĕ. «Çемйисемпе – ачисемпе, мăшăрĕсемпе – килекен арçынсем тĕлĕшпе, паллах, пысăк иккĕленӳ пулма пултараймасть, анчах арçын пĕччен килнĕ тĕк – тĕрĕслеме сăлтав пур», – терĕ ШĔМ ертӳçи.

Хăйĕн шăпипе те кăсăклантăмăр: эсир кунтан каясси пирки калаçлаççĕ... «Ниçта кайма та хатĕрленместĕп. Çапла, чĕнеççĕ. Кунтах ĕçлĕп – каять тени сасхура кăна», – татăклăн пĕлтерчĕ Сергей Евстафиевич.

■ Николай КОНОВАЛОВ

---

Пулать вĕт

## Полицие улталаймăн

***34 çулти арçын ют çын пурлăхне вăрланă, анчах полицейскисене пачах тепĕр майлă пĕлтернĕ – вăл мар, унăнне вăрланă имĕш. Çавна май халь унăн велосипед вăрланăшăн кăна мар, преступлени пулни çинчен суйса пĕлтернĕшĕн те суд умĕнче явап тытма тивĕ.***

Арçын Шупашкарти Çамрăклăх бульварĕнчи пĕр çурт подъезчĕ патĕнчен велосипед вăрласа кайнă. Ăна утланса килелле çул тытнă, анчах ӳксе велосипеда ватнă. Стрелоксен 139-мĕш дивизийĕн урамĕнче çаксекер çамрăксен ушкăнĕ патне пынă. Каччăсем ăна сăрапа хăналанă, анчах ют çынпа сăмах ваклас темен.

– Ку вара вĕсене кӳреннĕ, – пĕлтерчĕ ШĔМĕн тĕп хулари управленийĕн массăллă информаци хатĕрĕсемпе çыхăну тытакан инспекторĕ Наталья Венедиктова, – юсавсăр велосипедне улахрах вырăнта хăварнă та полицие шăнкăравланă, çамрăксем унăн транспорт хатĕрне вăрлани çинчен евитленĕ. Полици сотрудникĕсем ют пурлăха çаратнă тесе шанман каччăсене тытса чарнă, полицин тăваттăмĕш пайне илсе килнĕ.

Унта пĕтĕмпех уçăмланнă: нимĕнле çарату та пулман, хайхи çамрăксен ушкăнĕ тăракан вырăнтан инçех мар тупнă велосипед вара, чăнах та, вăрланăскер. Тинех арçын преступлени тунине йышăннă.

**Инна СУРКОВА.**

---

Яваплăх

## «Ытлашши» страховка

***Вăрнар районĕн прокуратури страхлакан компанисем ОСАГОпа ĕçленĕ май саккунсене пăхăннине тĕрĕсленĕ. Йĕркене пăснине тăрă шыв çине кăларнă.***

«Росгосстрахăн» вырăнти страховани пайĕнче лицензипе пăхнă ĕç-хĕл условийĕсене пăснине çирĕплетнĕ. Офисри суту-илӳ менеджерĕ тата страхлакан агентсем ОСАГО полисĕсем çук тесе гражданспе страховани килĕшĕвĕсем тума хирĕçленĕ тĕслĕхсем пулнă. Çавăн пекех ОСАГО полисĕсене çынсене хушма страховани тутарса кăна – хăйсен ирĕкĕпе инкек-синкекрен страхланипе пĕрле – сутнă.

Страховани ĕç-хĕлĕн условийĕсене вара саккун çирĕплетет, унпа килĕшӳллĕн тивĕçлĕ требованисене пăхăнмалла. Страховани организацийĕ пулăшу ыйтакан кашни çынпах килĕшӳ тума тивĕç. ОСАГО мелĕпе страхлама хирĕçлени, хăйсен ирĕкĕпе хушма страховка тума сĕнни – граждансен çак сферăри прависене сĕмсĕррĕн пăсни.

Тĕрĕслев кăтартăвĕсене тĕпе хурса Вăрнарти страховани пайĕн пуçлăхĕ тĕлĕшпе административлă правăна пăсни çинчен калакан ĕç пуçарнă. Миравай судья административлă кашни производствăпа ăна 3 пин тенкĕлĕх штрафланă. Йышăнусем саккунлă вăя кĕрессе кĕтмелли çеç юлать.

**Н.СТЕПАНОВ.**

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Ĕмĕтри хула

**? Америка рабочийĕсем Раççее социализм тума пулăшнă тени тĕрĕс-и? Хăçан пулнă вăл?**

**О.РОМАНОВ.**
Тăвай районĕ.



Ĕненме йывăртарах пулин те – Кемĕрте юмахри евĕр хулана XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсене туса лартнах.

1921 çулта Америка рабочийĕсем Раççее социализм тума пулăшас тĕллевпе тĕнчере пĕрремĕш хут интернационал промышленноç колонине – "Кузбасс" автономи индустри колонине /АИК/ – йĕркеленĕ. Кемĕре 23 тĕрлĕ нацин 600 яхăн çынни килсе çитнĕ. Шахтерсем, платниксем, çĕвĕçсем, чăх-чĕп ĕрчетекенсем, архитекторсем т.ыт.те пулнă вĕсен йышĕнче. Çынсем çемйисемпе пĕрле Çĕпĕр халăхĕ халĕччен курман япаласемпе – тĕслĕхрен, кĕпе çумалли машина /электричество вара çук/, инструментсем, оборудовани – куçарса килнĕ. АПШри колонистсен кандидачĕсем çула тухас умĕн 800 доллар пай укçи хывнă. Малтанхи вăхăтра пĕр-пĕринпе акăлчанла калаçнă.

Колонистсем тăватă çулта завод, электростанци хута янă, шахтăсене çĕнетнĕ, механизациленĕ, вĕсем 2-3 уйăхран малтанхинчен икĕ хут ытларах çĕр кăмрăкĕ кăларма пуçланă. Çывăхри ялсенчи хресченсем Америка техникипе вăйлатнă хуçалăхсене курса тĕлĕннĕ. Кунта пĕрремĕш хут кĕрхи тулă акнă, салат, дыня лартнă. Голланди архитекторĕ Ван Лохем çĕнĕ хула проектне туса хатĕрленĕ. Электричество тата шыв кĕртнĕ пурăнмалли çуртсене питĕ хăвăрт хута янă. Унта çĕр пӳртсенче тĕпленнĕ çынсем пурăнма куçнă. Хулара пилĕк шкул, тăватă библиотека, мунча, лавккасем, театр ĕçленĕ.

Анчах проект ĕмĕрĕ кĕске пулнă. Колоние ертсе пыма Коробкин коммуниста çирĕплетсен администраци аппарачĕ ӳссе ларнă, тăкаксен виçи вунă хут хăпарнă, çĕр кăмрăкĕ кăларасси тата рабочисен шалăвĕ тăрук чакнă. 1927 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче АИКа пĕтернĕ. Колонистсен пысăк пайĕ тăван çĕр-шывĕсене таврăннă. Кемĕрте пурăнакансем Европăпа Америкăн мал ĕмĕтлĕ çыннисем хута янă хулан ырлăхĕсемпе халĕ те усă кураççĕ.

## Командира улăштарнă

**? Совет Союзĕн Геройĕн Федор Ижедеровăн кунçулĕ кăсăклантарать. Мĕнле паттăрлăхшăн ăна Герой ятне панă?**

**И.ИВАНОВ.**
Элĕк районĕ.



Федор Николаевич Ижедеров 1922 çулта Самар облаçĕнчи Рысайкино ялĕнче çуралнă. Чăваш. 1927 çултанпа Приморье крайĕнче пурăннă. Пуçламăш шкул пĕтернĕ. Чукун çул станцийĕнче малярта ĕçленĕ. 1941 çулхи утă уйăхĕнче ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ. 1942 çулхи çурла уйăхĕнче Ф.Ижедерова фронта ăсатнă.

1944 çулхи утă уйăхĕн 16-мĕшĕнче стрелоксен 129-мĕш дивизийĕн 320-мĕш полкĕн /1-мĕш гварди армийĕ, 1-мĕш Украина фрончĕ/ взвод командирĕ Ижедеров лейтенант Ярчовцы ялĕ /Тернополь облаçĕ/ çывăхĕнчи çапăçура йывăр аманнă рота командирне улăштарнă. Вăл ертсе пынипе совет салтакĕсем тăшманăн темиçе атакине сирнĕ. Утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче ирхине рота пуринчен малтан Стрыпа шывĕ урлă каçса фашистсен траншейисене пырса кĕнĕ. Çапла майпа полка малалла ăнăçлă куçма çул уçса панă.

1946 çулта Ижедеров капитан саппаса тухнă. Самар облаçĕнчи Похвиçнĕ хулинче пурăннă. Сĕтел-пукан комбинатĕнче столярта ĕçленĕ.

Ф.Ижедерова 1945 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче Совет Союзĕн Геройĕн ятне панă. Çавăн пекех ăна Ленин, I степень Тăван çĕр-шыв вăрçин, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе, медальсемпе наградăланă.

## Сĕрме купăс хĕлĕхĕ

**? Вăтам ĕмĕрсенче сĕрме купăс хĕлĕхне мĕнрен тунă?**

**А.ЦВЕТКОВА.**
Сĕрпӳ хули.



Вăтам ĕмĕрти Итали ăстисем хĕлĕх хатĕрлемелли чи лайăх материал сурăх пырши пулнине асăрханă. Хăйсен ăслайне хӳтĕлес тĕллевпе сĕрме купăс ăстисем "кушак шăнăрĕнчен хĕлĕх тума аван" йышши сас-хура сарнă. Халап питĕ ăнăçлă пулса тухнă. Вăтам ĕмĕрте кушака вĕлерни пысăк инкекпе вĕçленессе питĕ хытă ĕненнĕ.

1750 çулччен сурăх пыршинчен сĕрме купăс хĕлĕхĕ тунă. Тин пуснă вылăх пыршине çуран, ытти таса мартан тасатса сивĕ шывра шӳтернĕ. Хыççăн чи лайăх лаптăксене хăю туса каснă, пĕтĕрттернĕ, хĕлĕх хулăнăшĕ тивĕçлĕ виçене çитиччен хырнă.

Хальхи вăхăтра хĕлĕхе пыршă, нейлон, хурçă хутăшĕнчен хатĕрлеççĕ. Анчах ăстасем çирĕплетнĕ тăрăх – пыршăран туни çемçерех сасă кăларать.

## Авалхи ĕç



Чăвашсемшĕн пахча çимĕç ӳстересси авалтан çĕр ĕçĕн хушма отраслĕ шутланнă. Хресчен çарăк, кăшман, кишĕр, купăста, хăяр, сухан, ыхра, кавăн, мăкăнь, кăшми, йӳç кăшман, хĕрен туса илнĕ. Çарăка вăрман уçланкисенче, хирте акнă. Юхан шыв хĕррине айлăмра, çаранра купăста пахчисем сарăлса выртнă.

1840-1870 çулсенче ялсене улшăну кĕртиччен çынсен хуçалăхĕнче пахча çимĕç ӳстерме вырăн сахал пулнă. Каярахпа пахча валли çĕр ытларах уйăрма пуçланă, вĕсене лайăх им-çамлама тăрăшнă. Пахча çимĕç ӳстересси хĕрарăм ĕçĕ шутланнă. Купăста, кăшми калчи ӳстерме хăш-пĕр çемье панча хатĕрленĕ. Çӳллех мар юпасем çине хăмаран çапса тунă ешчĕк лартнă, унта тăпра, çĕрленнĕ тислĕк тултарнă. Çĕрпе ешчĕк хушшине тислĕкпе улăм хунă. Вĕсем çĕрнĕ май ăшă кăларса тăнă.

**? Илтнĕ тăрăх – ял çыннисем шыв хĕрринчи çĕрсем çинче купăста нумай ӳстернĕ. Пахчара лартма юраман-ши? Пĕлес килет: ĕлĕк хресченсем хушма хуçалăхра тата мĕнле çимĕç туса илнĕ?**

**А.ПРОКОПЬЕВА.**
Вăрнар районĕ.

Чăвашра чĕлĕм туртма пуçласан махорка акса ӳстерме тытăннă. Каярахпа вăл сутлăх культура пулса тăнă. XIX ĕмĕр варринче Улатăр тăрăхĕнчи хресченсем махоркăпа суту-илӳ тума пуçланă.

Теччĕ, Шупашкар, Етĕрне уесĕнчи ялсенче хăяра, купăстана сутмалăх та ӳстернĕ. Чăваш Енре çĕр улмие XVIII ĕмĕрте лартма пуçланă. Анчах коллективизаци тапхăрĕччен вăл пысăк тупăшпа савăнтарайман.

Техĕмлĕ курăксене вуçех те ӳстермен. Укроп, пахча кĕнçи хуçалăхсене 1930-1950 çулсенче кăна çитнĕ. Хăш-пĕр хресчен 1930 çулсенче помидор ӳстерме пикеннĕ.

Коллективизаци хыççăн уйрăм хуçалăхсенче пахча лаптăкне пысăклатнă. Малтан авăн карти йышăннă çĕрсем çинче тĕрлĕ çимĕç ӳстерме пуçланă. Пысăк пайне çĕр улми йышăннă. Вăхăт иртнĕ май ял çыннишĕн хушма хуçалăхра пахча çимĕç ӳстересси тĕп вырăна тухнă.

## Çемье чысне упракансем хисепре

**? Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕнче кăтартуллă мăшăрсене орденсемпе тата медальсемпе чысласси йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Кăçал тата пĕтĕмпе ку таранччен миçе çемье çак наградăна тивĕçнĕ?**

**А.ПЕТРОВА.**
Сĕрпӳ хули.

Раççейре Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне пĕрремĕш хут 2008 çулта паллă тунă. Чăваш Енре çак уяв тĕлне республикăри пултаруллă çемьесене пысăк наградăсемпе чысласси – ырă йĕрке.

Кăçал 14 мăшăр, 50 çул каялла çемье çавăрса "Раççее юратнăшăн граждансем" ӳстернĕскерсем, "Юратупа шанчăклăхшăн" ордена тивĕçнĕ. Ку наградăна Чăваш Ен Пуçлăхĕ 2009 çулта "çемье институтĕн хисепне тата ăс-хакăл пуянлăхне вăйлатас" тĕллевпе çирĕплетнĕ. Кунсăр пуçне кăçал 25 çул тата ытларах пĕрле пурăнакан 70 мăшăра общество наградипе – "Юратупа шанчăклăхшăн" медальпе – чысланă.

Ку таранччен Чăваш Енре 75 çемье – ордена, 243-шĕ медале тивĕçнĕ. Тăватă чăваш çемйине Раççейĕн патшалăх наградипе – "Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ" орденпа – чысланă. Нумай ачаллă ултă çемье "Ашшĕ-амăшĕн мухтавĕ" орден медальне илнĕ.

## Бахаизм

**? Бахаизм тĕнĕ пирки пĕлес килет. Мĕнле уйрăмлăхсемпе палăрса тăрать вăл? Чăваш Енре çак тĕнпе пурăнакансем пур-и?**

**М.САМСОНОВ.**
Шупашкар районĕ.

Бахаизм /бехаизм/ – тĕн юхăмĕсенчен пĕри, иран-перссен "бахаулла" сăмахĕнчен пулнă, "турă çути" тенине пĕлтерет.

Бахаи ĕненĕвĕ XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррине Персире çуралнă. Пуçарса яраканĕсем – Сеид Али Мохаммад /1819-1850/, историе Баб ятпа кĕрсе юлнăскер, тата Мирза Хусейн Али /1817-1892/, Баха-улла /е турă çути/ ят илнĕскер. Бахаизм Осман тата Раççей империйĕсенче, Индире мăсăльмансем пурăнакан регионсенче анлă сарăлнă.

Çак ĕненӳ исламран тĕн идейисене, пророк сăмахĕсене, хăшпĕр йăла-йĕркене илнĕ. Бахаизм вĕрентĕвĕнче тĕп виçĕ никĕс: турă пĕрлĕхĕ; этемлĕх пĕрлĕхĕ; мĕн пур тĕн пĕрлĕхĕ.

Хусан миссионерĕсен витĕмĕпе Чăваш Енре бахаизм тĕнне 1992 çулта йышăнма пуçланă. Шупашкарти ушкăн йышĕ улшăнсах тăрать, ытларах пайĕ – аслă шкулсенче вĕренекен студентсем.

**Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.**







# КУЛЬТУРА

## Ĕмĕрсен еткерĕ

Чунри

# Уявсем хыççăн çуралнă шухăшсем

***Çĕртме уйăхĕ культура мероприятийĕсемпе пуян пулчĕ: республика шайĕнче çеç мар, районсенче те, регионсенче те Акатуйĕсем иртрĕç, Республика кунне тĕрлĕ мероприятипе паллă турăмăр. Унсăр пуçне Шупашкарта федерацин Атăлçи округĕнчи субъектсен Культура çулталăкĕнчи паха опытне палăртас тата ыттисен хушшинче сарас тĕлĕшпе конференци те пулчĕ. Уявсем, шавлă кунсем хыçала юлчĕç.***

***Мĕнле йĕр хăварчĕç вĕсем пирĕн чĕресенче, паха енĕ мĕнре палăрчĕ?***

Акатуйсене илес тĕк /хальхи пек шайра кăçалхипе иккĕмĕш хут иртрĕ/ акă мĕн пирки чарăнса тăрассăм килет: чăваш халăхĕ юратакан мероприяти пулса тăчĕ вăл. Çакна пĕчĕк пĕр тĕслĕхпе çирĕплетесшĕн. Кăçал вăл ăçта усăлнине хаçатсенче тĕрĕс палăртманран Шупашкар çыннисемпе хăнасем малтанхи çулсенчи пекех тĕп хулари «Шупашкар: 500 çул» ятпа çўрекен культурăпа кану паркне пысăк йышпа пуçтараннăччĕ. Акатуй вара адресне улăштарчĕ, Анне монуменчĕ патĕнче хўтлĕх тупрĕ. Вăйă картине тăнă хĕрсемпе каччăсем палăк тавра юрласа çавăрăнчĕç. Харăсах ун чухлĕ çын /1000 яхăн/ вăйă кăшăлне тăнине курнă-ши пирĕн Анне палăкăмăр?

Çак йышах Хĕрлĕ Тўреме çитрĕ. Унта халĕччен Акатуй ялавĕ вĕлкĕшменччĕ-ха. Кунтах муниципалитет районĕсен этнографи килçурчĕсем, йăла-йĕркепе паллаштаракан хатĕрсем «ўссе ларнăччĕ». Республика çыннисемшĕн те, хăнасемшĕн те кăсăклăччĕ çакă. Кашни район хăйĕн еткерĕпе, ăс-пурлăх культурипе мăнаçланма пултарчĕ. Регионсенчи наци культура автономийĕсен ертўçисен шухăш-кăмăлне пĕлес килчĕ: мĕнлерех хакласçĕ вĕсем çĕнĕлĕхе?

Геннадий Александров – Беларуçри «Атăл» чăваш наци культура автономийĕн председателĕ:

– Чăваш Енрен кашнинчех тулли кăмăлпа каятăп. Эпĕ çеç мар, Минскра чăмăртаннă «Хамăр ял» ушкăн та. Кăçал 20-ĕн килтĕмĕр. Хамăрпа мухтанса илем-ха. Çĕртме уйăхĕн 6-7-мĕшĕсенче Гроднăра республикăри халăхсен уявĕ иртрĕ. Унта эпир те хутшăнтăмăр, чăваш культурипе, йăли-йĕркипе, апатçимĕçĕпе паллаштартăмăр, пĕрремĕш вырăн йышăнтăмăр. Акатуй пирки вара çакна каласшăн: кирлĕ пире çакăн пек уяв. Вăл Хĕрлĕ Тўремре – хула чĕринче – иртни кăмăла тата та çĕклентерет. Асатте-асаннесен, несĕлĕмĕрсен умĕнчи айăнăмăра пĕчĕклетет.

Самар облаçĕнчи чăваш наци культура пĕрлĕхĕсен координаци канашĕн ертўçи Николай Давыдов тата Сарă ту облаçĕнчи чăваш наци культура автономийĕн председателĕ Сергей Васильев Акатуй тинех Хĕрлĕ Тўреме çитнишĕн тем пек хĕпĕртенине палăртрĕç, кунта чăваш Юпи кăна çитмест терĕç.

Халăх пултарулăхĕн «Раççей çăлкуçĕсем» фестивалĕ, вăл Шупашкарта çирĕм иккĕмĕш хут иртрĕ, кăçал Китай юрă-ташă ăстисемпе савăнтарчĕ. Унтан харăсах икĕ коллектив килнĕччĕ.

Культура çулталăкĕнче халалланă конференци патне таврăнар-ха. Вăл çĕртме уйăхĕн 17-18-мĕшĕсенче иртнĕччĕ. Сăмах илекенсем нумайăн пулчĕç. Кашнийĕ регионта Культура çулталăкĕнче пурнăçлакан пĕлтерĕшлĕ ĕçсем пирки каласа кăтартрĕ. Эрĕнпурсем, сăмахран, округри наци театрĕсен фестивальне йĕркеленĕ, унта К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ те хутшăннă.

Мари Элти культура ĕçченĕсем бизнесра вăй хуракансемпе партнер комитечĕ йĕркеленĕ. Çакă чылай пысăк проекта вăраха тăсмасăр пурнăça кĕртме пулăшать-мĕн. Культура çулталăкĕнче кўршĕ республикăра Оперăпа балет театрĕ çĕнĕ çурта куçнă.

Мордва Республикин культура министрĕ Владимир Шарапов пĕлтернĕ тăрăх – унти кашни вунă çынран пĕри культура марафонне хутшăнать. Яллă вырăнти культура учрежденийĕсен пурлăхпа техника базине лайăхлатма Культура çулталăкĕнче 125 млн тенкĕ уйăрнă.

Чул хуласем çамрăксемпе ĕçлессине тĕпе хунă, ку енĕпе искусствăн урамра иртterекен тĕсĕсемпе анлă усă курасçĕ. Халăх пултарулăхĕн ăстисен энциклопедине кăларса та палăрнă.

Чăваш Енре те Культура çулталăкĕнче вун-вун мероприяти иртет. Ачасемпе, çамрăксемпе тытакан çыхăну фестивальсем урлă çирĕпленсе пырать. Çапах та çулталăкăн тĕп паллине уçса паракан, халăх асĕнче нумайлăха юлакан мероприятисем хальлĕхе пулаймарĕç пек туйăнать-ха.

Çуллахи тапхăрти мероприятисем вĕçленчĕç пулĕ. Кĕркунне палăртнă ĕçсене пурнăçлама çĕнĕ вăйпа пуçăнасса шанатпăр, кĕтетпĕр.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Сĕнў

# Юбилей умĕн – поэт энциклопедийĕ

***2015 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче чăваш поэзийĕн классикĕ Константин Иванов çуралнăранпа 125 çул çитĕ. Поэтăн 100 çулне ЮНЕСКО календарьне кĕртсех паллă тунăччĕ. Умри аслă юбилее те çĕр-шывăмăр чыслă палăртма хатĕрленет.***

Паллăрах ĕçсенчен К.В.Ивановăн «Нарспи» поэмине Валери Туркай пуçарăвĕпе пĕлтĕр 7 чĕлхепе пĕр кĕнеке туса кăларнине, Праски Виттипе Анатолий Миттов ўнерçĕсем поэма тăрăх ўкернĕ сăнсен темиçе паха альбомне, Петр Сизов художник илемлетнĕ «Нарспин» кăçалхи çĕнĕ кăларăмне, Слакпуç ялĕпе унти халăх сăмахлăхĕ çинчен çырнисене пухса кăларнине, поэма турккăлла виççĕмĕш хут тухнине асăнмалла пулĕ. Нумай пулмасть Юрий Артемьев тĕпчевçĕн К.В.Иванов çинчен çырнă кĕнеки çутă курчĕ. Юбилей тĕлне Слакпуçĕнче К.В.Иванов, Я.Г.Ухсай музейĕсене пуянлатма, ялти тăван тавралăх музейне йĕркелесе çитерме, ун умне паллă музейçăсене Петр Кудряшевпа Гурий Макаров ăсчахсене халалланă асăну хăми çапма палăртаççĕ. Слакпуçĕнче музей йĕркелене Петр Кудряшевăн тăванĕсем, Муром хулинче тата Мускав облаçĕнчи Шатура районĕнче пурăнакан хĕрĕпе ывăлĕ Слакпуççене пулăшма хатĕррине пĕлтерчĕç.

Чăваш халăх ăс-хакăлĕпе ўнерçĕсен академийĕ поэт юбилейĕ тĕлне К.В.Иванов энциклопедийĕн ал çырăвне хатĕрлеме палăртать. Унта юратнă сăвăçăмăрăн пĕтĕм пурнăçĕпе пултарулăхĕ, вăл пурăннă, пырса çўренĕ вырăнсем, пĕрле вĕреннĕ, ĕçленĕ юлташĕсем, ăна пĕлнĕ, тĕпченĕ çынсен ĕçĕсем, аса илсе çырнисем, ўкерчĕксем тата ытти те тулли палăрса юлмалла. Чăваш культуринче халĕччен ун пек энциклопеди пулман-ха, çавăнпа ăна хатĕрлесси самаях йывăр та нумай шыравлă ĕç. Пирĕн шухăшпа – К.В.Иванов энциклопедине кăларассине Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕпе пĕрле тумалла, мĕншĕн тесен вăл пит явапллă та пысăк пĕлтерĕшлĕ тата тĕпчев мĕнтелĕсен ытларах пайĕ институтăн ăслăлăх архивĕнче упранать.

Аслă поэт энциклопедине Республикăн юбилей программине кĕртсех хатĕрлеме сĕнетĕп. Вăл ĕçе К.В.Иванов пултарулăхне тĕпчекенсем, вĕрентекенсем, тавра пĕлўçĕсем, поэтпа «Нарспие» юратакансем май пур таран пулăшасса ним иккĕленмесĕр шанса тăратăп.

■ **В.СТАНЬЯЛ,**
**Чăваш Ваттисен тĕп канашĕн ертўçи**

# Паллă вырăнсене çитсе курнă

***Куславкка район территорийĕнче культура еткерлĕхĕн 32 объекчĕ вырнаçнă, çав шутра пĕри федераци пĕлтерĕшлĕ, ыттисем – регион тытăмĕнчисем. Çаккерсенчен ултташĕ – Куславккара. Чăваш Республикин культура министрĕ Вадим Ефимов ĕçлĕ çўревпе районта пулнă май вĕсенчен хăш-пĕрне çитсе курнă.***

Райадминистрацин пуçлăхĕн çумĕпе Марина Солдатихинăпа пĕрле Николай Лобачевский математикăн çуртусадьбине /унта ăсчах 1848-1856 çулсенче çуллахи вăхăтра пурăннă/, Жомени барон, Волчков купса çурчĕсене кĕрсе тухнă. Министр пĕлтернĕ тăрăх – культура еткерлĕх объекчĕсен управ зонисен проекчĕсене хатĕрлес енĕпе пысăк ĕçсем пыраççĕ. Вĕсене упраса хăварас тĕлĕшпе те май çитнĕ таран ĕçлеççĕ. Сăмахран, 2011-2012 çулсенче Жомени баронăн çуртне юсама 2.5 млн тенкĕ уйăрнă. Çав укçапа çуртăн çи виттине тĕпрен лайăхлатнă, ытти ĕçе пурнăçланă. Кăçал вырăнти бюджет укçипе объекта газпа тивĕçтермелле. Пурнăçламалли тата та нумай-ха.

**Надежда ГЕОРГИЕВА.**



## Ятне упрасчĕ

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕ Юрий Ксенофонтов скульптор çуралнăранпа кăçал 75 çул çитрĕ. Юрий Иванович чăваш ўнер искусствине аталантарас ĕçе пысăк тўпе хывнă. Вăл – республикăри профессионал скульпторсенчен пĕри.

Пирĕн шухăшпа – ентешĕн ятне вилĕмсĕрлетмелле, çавăнпа Юрий Ксенофонтовăн ятне пĕр-пĕр ўнер е искусство шкулне, е урама пама сĕнетпĕр.

Раççей Художниксен союзĕн, Чăваш художникĕсен союзĕн членĕсем:

**В.Яковлев, В.Кузьмин, В.Федоров, Ю.Матросов, О.Ксенофонтов, Н.Енилин, А.Брагина, П.Пупин, В.Петров /Праски Витти/ тата ыттисем те.**

• ➡ 6,11,12 стр.

КУЛЬТУРА

*Пленэр*

# Юратнă вырăн



• Ю.Пастухова.

Пĕтĕм тĕнчери Кокель ячĕллĕ саккăрмĕш пленэр Патăрьел районĕнчи Турханта халь çеç ĕçлеме пуçланă пекчĕ, паян акă пысăк куравпа хупăнĕ те.

Çак тапхăрта Раççей ўнер академийĕпе Украина Наци художникĕсен союзĕн, Патăрьел район администрацийĕн, Турхан ял тăрăхĕн, ЧР Художниксен союзĕн хўттипе иртекен пленэрта Раççейрен тата Украинăран 70 ытла художник пулнă, вĕсем 700 ытла этюд, картина çырнă. Темиçе çул çак ĕçе йĕркелеме И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ хутшăннă, художниксем валли лайăх условисем туса панă. Унта кун çути курнă картинăсем валли 2009 çулта университетра А.А.Кокель ячĕллĕ Ўнер музейĕ уçнă. Шăпах çавăнта тĕл пулнă та Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕ Владимир Путин 2010 çулта Чăваш Енри студентсемпе. Турханта çуралнă картинăсен пĕр пайĕ Раççейри, Украинăри, АПШри, Германири, Францири, Италири, Китайри музейсемпе уйрăм çынсен коллекцийĕсене илем кўрет.

Камсем тата ăçтан килсе çитнĕ-ха кăçал Юхмапа Пăла тăрăхне? Украина Наци художниксен союзĕн членĕсем Юлия Пастуховăпа /Харьков/, Мария Малинина /Крым/ живописецсем, Удмурт халăх художникĕ Александр Ложкин, Хусантан – Раççей Художниксен союзĕн членĕсем Елена Баймяшкина тата Юрий Капитонов, Пензăран – Раççей Художниксен союзĕн членĕсем Еленăпа Андрей Вилковсем, Чăваш Енрен – Раççей Художниксен союзĕн членĕсем Константин Долгашев тата Ольга Леонтьева живописецсем, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студентки Карина Родионова.

Пĕлтĕр те, виçĕм çул та, тата маларах та, пленэр ĕçленĕ вăхăтра Турхана çитсе килнĕччĕ. Çавăнпа малтан курнăçнă художниксемпе тепĕр хут тĕл пулма уйрăмах кăмăллă пулчĕ. Сăмахăм Елена Баймяшкина тата Юрий Капитонов пирки. Пĕр вырăна темиçе хут килни, пĕр япаланах ўкерме тивни кичем мар-ши? Çакăн пирки художниксем хăйсем мĕн шухăшлаççĕ-ха?



• Чăваш ялĕнчи тĕл пулу.

**Юрий Капитонов:**

– Çак хутлăх – манăн юратнă вырăн. Эпĕ кўршĕ ялта – Анат Тăрмăшра çуралса ўснĕ, Турхан вăтам шкулне пĕтернĕ. Ўнер енĕпе пĕрремĕш пĕлў панă вĕрентўçĕ те кунтанах. Вăл – Валентин Сергеев.

Эпĕ – ирĕклĕ художник. Хула пейзажĕсене, историпе çыхăннă çуртсене, килти хуçалăхри чĕр чунсене ўкерме кăмăллатăп. Художник нумай, çавна май конкуренци те пысăк. Пленэр пире малалла ăнтăлма пулăшать. Чăваш ялне сăнама юрататăп. Пĕр япала патне тепре таврăнни пĕрре те кичем мар. Кашни самантра çын туйăмĕ улшăнса тăрать-çке, вăл е ку япалана тĕрлĕ вăхăтра расна йышăнатăн, çавăнпа ĕçсем те улшăнса, çĕнĕ тĕспе пиçсе тухаççĕ.

Пашьел енне кайса килтĕм, унти хыр вăрманне ўкертĕм. Аваллăхпа çыхăннă тема та канăç памасть. Ĕçлемелли, тĕв туса хунă ыйту питĕ нумай. Вĕсене тепĕр пленэрта та пурнăçа кĕртсе пĕтерейĕмĕн.

**Елена Баймяшкина:**

– Виççĕмĕш хут килнĕ эпĕ Кокель пленэрне. Хусанти экономикăпа право институчĕн дизайн кафедринче ĕçлетĕп. Вĕренў çулĕ вĕçленессе, пленэр пуçланасса чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Мĕн илĕртет-ха Турхан хутлăхĕнче? Кунти çут çанталăк вăйĕ, кăмăллă лару-тăру, çынсен сăпайлăхĕ, тараватлăхĕ.

Тĕрлĕ регионти ĕçтешсем, пĕр шухăшлă çынсем пуçтарăнаççĕ пленэра. Харьков шкулĕн, ытти регион художникĕсен пултарулăхĕпе, опычĕпе паллашма яланах хавас. Кунта командăпа, ушкăнпа ĕçлени пĕрлĕх туйăмне вăйлатать. Çакăн пек тĕл пулусем пире малалла ўсме, аталанма пулăшаççĕ.

Натурăпа ĕçлесси – художникăн чи пысăк ĕмĕчĕ. Эпир пурте тенĕ пекех вырăнти шкулти чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Ружена Родионовăна ўкертĕмĕр. Кашнийĕн тĕрлĕ пулса тухрĕ. Çапла пулмалла та. Никам та пĕр-пĕрне хистемест, тиркемест.

**Карина Родионова:**

– Ружена Владимировна – манăн анне. Эпĕ те ўкертĕм ăна. Çăмăлах пулмарĕ, çапах та Юрий Капитонов тата Турханти пĕрремĕш вĕрентўçĕ Валентин Сергеев хавхалантарса, пулăшса тăчĕç.



• Е.Баймяшкина.

Пĕчĕкрен ўкерме юратнăскер пленэрпа питĕ кăсăкланнă, хăнасене кĕтсе илме хутшăннă. Мана кашнинчех украинла: «Алексей Кокель çĕр-шывĕнче пурсăра та курма хавас, Украинăпа Чăваш Ен яланах туслă пурăнччăр», – тесе калаттаратчĕç. Халĕ акă хам та унта хутшăнма пуçларăм. Университетри дизайн факультечĕн пĕрремĕш курсне пĕтертĕм. Чăнчăн ўнерçĕ пулас тесен вĕренмелле те вĕренмелле-ха.

**Мария Малинина:**

– Эпĕ Турханта пĕлтĕр те пулнă. Кичем тетĕр-и? Пачах çук. Мана чăваш теми питĕ кăсăклантарса ячĕ. Иртнĕ çул «Чăваш ялĕнчи тĕл пулу» пысăк ĕçĕн этюдне пурнăçланăччĕ. Тăван тăрăхра унпа малалла ĕçлерĕм. Картинăна йĕркене кĕртрĕм темелле, каялла илсе килтĕм, ăна Чăваш Ене парнелесшĕн.

Кăçал пурнăçлакан пысăк ĕç «Турхан урамĕ» ятлă. Алексей Кокелĕн те шăпах çакăн пек ятлă ĕç пур. Ăна 110 çул каялла ўкернĕ. Эпĕ хальлĕхе çав ĕçе курман-ха, Шупашкарта, Чăваш патшалăх ўнер музейĕнче, упранать терĕç. Кăсăклă танлаштару пулĕччĕ. Мана кунта ĕçлеме питĕ килĕшет: çут çанталăк та, çынсем те пач урăх. Халăх тумĕ хăйне евĕрлĕ. Çав самантсене шута илме тăрăшатăп.

**Юлия Пастухова:**

– Эпĕ Чугуев хулинчен. Унта паллă ўнерçĕ Илья Репин çуралнă. Илья Ефимович вара Кокелĕн вĕрентекенĕ пулнă. Репин çуралнăранпа кăçал 170 çул çитет.

Чăваш çĕрĕ юмахри пекех: йывăççем нумай, тўпе çўллĕ, таса. Кунта пуçласа йывăçран тунă авалхи çуртсене куртăм. Пирĕн тăрăхри ялсенче çуртсене тăмран ăсталанă. Эпĕ те «Турхан урамне» ўкеретĕп. Ăçтан пуçлас, ăçта вырнаçас тесе шухăшларăм пĕр кана. Хам сисмесĕрех Кокельсен çурчĕ тăнă вырăна суйласа илтĕм. Халĕ сăрă ăсти хыçран сăнаса тăнăн туйăнать. Вырăнти архитектура, йăла-йĕрке, халăхăн хăй евĕрлĕхĕ – ўнерçе шăпах çакă кăсăклантарать. Ман шухăшăмпа, Раççейĕн «кăвапи» шăпах çак вырăнта.

**Александр Ложкин:**

– Чăваш Енре пĕрремĕш хут мар, «Пысăк Атăлăн» Шупашкарта иртнĕ кашни куравне хутшăннă. Эпĕ 77 çулта, Шупашкарта туссем пур. Вĕсем – Николай Карачарсков, Ревель Федоров, ыттисем те.

Пленэр – йĕркелў енĕпе чылай уйрăлса тăрать. Кунта мĕн кирлипе пĕтĕмпех тивĕçтернĕ: ĕçле кăна. Столовăйĕнче ресторанри пек çитереççĕ. Сăмахăм апат-çимĕç пуянлăхĕ пирки мар, ăна илемлетес тĕлĕшĕпе ĕçлекенсем çинчен. Кунта та ўнерçĕ чунлă поварсем пур.

Чăваш Енре çеçен хир пысăк лаптăк йышăнать, Удмурт Республикинче – сăртлă-туллă вырăнсем, 40 метртан та вăрăм чăрăшсемпе хырсем кашласа лараççĕ.

Тата акă мĕн тĕлĕнтерчĕ: сирĕн художниксем икĕ союзра тăраççĕ иккен, çыравçăсен пĕрлĕхĕсем тата та ытларах терĕç. Пирĕн профессионал художниксем сирĕнни пек йышлă мар çав, пурĕ те 90 яхăн çеç.

Çивĕч ыйтусем вара пĕр евĕрлех: пединститутра ўнерпе графика факультетне пĕтерчĕç, искусство институчĕ йĕркелесе ячĕç. Унта вара рисовани учителĕсене хатĕрлемеççĕ. Кунашкал пленэрсем ирттермеççĕ, сăлтавне укçа-тенкĕ çуккипе çыхăнтараççĕ. Уй-хирсем çум курăкĕпе, кирлĕ-кирлĕ марпа тулса ларни, ем-ешĕл курăка çулас текенсем çукки те чуна ыраттарать. Тепĕр чухне тарăхнипе çапла та шухăшлатăп: эпĕ мĕншĕн выльăх марши, халăх усă курман курăкпах тăраннă пулăттăм.

Пушкинпа çыхăннă хутлăхсене ўкерме кăмăллатăп, Болдинăри кĕркуннене чăтăмсăррăн кĕтетĕп.

Ўнерçĕсем столовăй ĕçченĕсен ячĕпе тав сăмахĕсем калани пирки пленэр координаторĕ Владимир Васильев акă мĕн хушса хучĕ:

– Шкул столовăйĕнчи Галина Петрова, Валентина Фомина тата Альбина Карлинова поварсем чунне парса ĕçлеççĕ. Галина Васильевна, сăмахран, хăй вăхăтĕнче Шупашкарти пĕр ресторанра вăй хунă, Турхан каччипе пĕрлешсен яла таврăннă. Çавăнтанпа шкул столовăйĕнче ĕнтĕ вăл.

Художниксем шкулта тĕпленнĕ май вĕсем валли тутлă апат хатĕрлессине хăйсен тĕп тивĕçĕ тесе йышăнаççĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА.**

Автор сăн ўкерчĕкĕсем



• Ю.Капитонов ĕçĕ.

ХЫПАР



*Экоĕренӳ*

# Чĕр чун музейне упраса хăварар

*ЧР Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин шкул тулашĕнчи ĕçсен «Эткер» центрĕн вăрман, уй-хир, шыв-шур чĕр чунĕпе вĕçен кайăк-кĕшĕкĕн музейне Шупашкарта çеç мар, район-хулара та лайăх пĕлеççĕ.*

Нумаях пулмасть унта «Хыпар» журналисчĕсем те пулса курчĕç. Экспонатсене пысăках мар икĕ залра вырнаçтарнă. Акă – «Кăнтăрлахи вăрман» диорама. Ăна 17 çул каялла тунă. А.Романов ӳнерçĕ илемлетме хутшăннă. Малтан 19 чĕр чун кĕлеткине çеç кăтартнă. 2003 çулта кĕтесе 23 кӳлепепе пуянлатнă, пĕлтĕр татах çĕнетнĕ. Халĕ – 60 сĕрелте.

«Сăр юхан шывĕн айлăмĕ» диорамăна 1997-1998 çулсенче майлаштарнă. Вăл 52 экспоната пĕрлештерет. 2001 çулта «Сăрçи» заповедникăн Улатăр районĕнчи лаптăкĕнчи Старица кӳллине евĕрлекен диорама ăсталанă. Каярахпа унта 3 объект хушнă. Экспозици шыв-шурпа унăн таврашĕнчи ӳсен-тăранăн – 10, моллюскпа хурт-кăпшанкăн – 18-шар, пуллăн – 11, çĕр çинче шăвакан чĕр чунпа кайăкăн – 4-шар, сĕтпе тăрантаракан чĕрлĕхĕн пĕр тĕсĕнчен тăрать. Пурĕ 280 объектпа, хурт-кăпшанкăн 361 тĕсĕпе, сĕтпе тăрантараканăн 15 кӳлепипе паллаштарнă.

«Ку катемписене ăçтан илсе килнĕ чĕр чунсенчен меллештернĕ?» – ыйтрăмăр экспонатсемпе паллаштаракансенчен. «Республикăри районсенченех, – терĕ центра сахал мар ертсе пынă Наталья Панченко, нумаях пулмасть «Сăрçи» заповедник директорĕн çумĕнче ĕçлеме пикеннĕскер. – Вĕсене ăсталаканĕ – чĕр чун тĕнчине нумай çул тĕпчекен Константин Арзамасцев. Акă вăл сирĕн умăрта. Паллах, музее «Эткерпе» «Сăрçи» сотрудникĕсем пĕрле ĕçлесе аталантарнă».

Иккĕмĕш пӳлĕмре çунаттисене сарнă шап-шурă акăш тӳрех куçа тăрăнчĕ. «Виллине Каспи тинĕсĕнчен кӳнĕ. Ытти чĕрлĕх – Чăваш Енрен, – терĕ Константин Иванович. – 218 тĕрлĕ кайăк кӳлепипе 116 тĕсĕ».

Музейре сĕтпе тăрантаракан чĕр чунсен – 346, кайăк-кĕшĕкĕн 254 сĕрелти, сĕтпе тăрантараканнин 150 пуç шăмми упранать. Чĕр чун тушкинчен кĕлетке евĕрлекен К.Арзамасцев пек маçтăр республикăра темиçе çеç. «Экспонат тума ку чĕр чунсене ятарласа тытнă-и?» – чи малтанах çак ыйту кăсăклантарчĕ пире. «Вĕлерес тĕллевпе «серепене» çаклатни пĕрре те çук, – хуравларĕ ăстаçă. – Чĕрри-сыввине йышăнмастпăр. «Эткер» – зоопарк е чĕр чун тытма ирĕк панă вольер мар. Эсир кунта мĕн курни пурте – вилерен. Чĕрĕ пекех туйăнаççĕ. Килĕшетĕр-и? Сăмахран, шурă тăманана – Шупашкар районĕнчи Ишлей станцийĕнчен, вăрман сăсарне Элĕк тăрăхĕнчен илсе килнĕ. Акарçăсем тилĕпе шур мулкач виллине сунар тапхăрĕ иртсен «парнелерĕç». Малтан тĕлĕнтĕм. «Чĕр чун тытмалли вăхăт тахçанах иртнĕ. Мĕншĕн вĕлертĕр?» – терĕм. Шарламарĕç. «Йышăнса юлмасан çырмана перетпĕр», – те чăнласах каларĕ пĕри. «Вилнĕскерсене чĕртсе тăратаймăн. Экспонат хатĕрлĕп», – тесе илсе юлтăм. Тăманана Красноармейски енри Упи ялĕн учителĕ килсе пачĕ. Çак кайăк кăвакала пулас диорамăра «Эткерĕн» ун чухнехи директорĕ Наталья Панченко тĕлĕкре курнă. Тепĕр кунне ирех унпа паллаштарчĕ те – сĕнӳпе сăмахсăрах килĕшрĕмĕр. Кăвакала варринех вырнаçтартăмăр. Аялта – Сăр карасĕ. Браконьерсем ăна, юхан шыв ейĕве кайсан кӳлленчĕке лексе юлнăскере, миххе чикнĕ чух 3-4 килограмран кая мар тайнă».

«Ун пек караса республикăра сайра тĕл пулатăн, – калаçăва хутшăнчĕ Н.Панченко. – Пĕррехинче пуçламăш класра вĕренекен ача: «Эпĕ – пулăçă. Анчах кун пек пысăккине тытман, – терĕ. – Эсир ăна юриех пысăклатса лартнă». Эпĕ пĕр самант аптраса тăтăм. Вара хăвăртрах: «Тен, музее эсĕ тытнă пеккинех илсе килнĕ. Вăл диорамăра çитĕнсе мăнтăрланнă», – терĕм. Тантăшĕсем вăлтса каланă сăмаха тĕрĕс ăнланчĕç».

«Заповедник инспекторĕсем пĕррехинче «Сăрçи» вăрманĕнче шăршланнă хир сыснин виллине тĕл пулнă, – аса илчĕ К.Арзамасцев. – Миххе чиксе Шупашкара çитрĕç. Унăн çывăхĕнче тăма йывăрччĕ. Сăмсана усал шăршă кӳ! перетчĕ. Пур пĕр кӳлепине сĕреплерĕм. Карăкпа ăсан амисем Атăл урлă вĕççе каçнă та – пĕрремĕшĕ тĕп хулари Хусанкай керменĕ çумĕнчи нумай хутлă çурт кантăкне тăрăнса, тепри Çĕнĕ салари автостанцире йытă çăварне лексе пурнăçне вĕçленĕ. Акă юнашарах – пĕркĕт. 2001 çулта заповедникĕн хӳтĕлев лаптăкĕнче сунарçăсен капкăнне лекнĕскерĕн пĕр чĕрни çав самантрах татăлса ӳкнĕ. Унтан вĕçерĕнессишĕн виçĕ кун асапланнă. «Сăрçи» хуралĕ ăнсăртран асăрхасан сарлака çуначĕсене те çĕклеймен. Сĕрелтелерĕм те вырнаçтарса лартрăм. Пĕркĕт сĕмеки пур вĕт. Сунарçăсем персе антарнă уй ăмăрт кайăкне те ман пата çĕклесе килчĕç. «Çак мĕнле енлĕк?» – теççĕ. Эпĕ çăвара шыв сыпнă пек тăратăп... Пирĕн акарçăсен хальлĕхе çавнашкал шай».

Йăлăмри карăксен кĕлеткисем те куçа илĕртеççĕ. Пĕрремĕшĕ – Атăл карăкĕ. Вăл Чăваш Енре çеç йăх тăснине 1907 çулта С.Бутурлин профессор, орнитолог тĕпчев ирттерсе çирĕплетнĕ. Хальхи вăхăтра Чăваш Енре пачах тĕл пулман этелĕк пурăннă чух таврари кайăксене вертолетсен лапамĕнчен хăваласа хăратма пулăшнă. Хăшĕ-пĕри, паллах, ашпа тăранаканскерĕн çивĕч чĕрнисене çакланнă.

Музей пуянлăхĕпе «Сăрçи» тата «Эткер» иртттерекен олимпиада-конкурсра, шкул вăрманлăхĕсен республика слетĕнче тухăçлă усă кураççĕ. Ачасене экскурсие кашни районтан илсе килеççĕ. «Музей пĕлтерĕшĕ вĕренӳ ĕçĕнче питĕ пысăк, – терĕ «Сăрçи» директорĕ Евгений Осмелкин. – Шел те, ăна хупасшăн. Çут çанталăк тусĕсем ку шухăшпа килĕшмеççĕ. Музее упраса хăвармаллах».

Экспонатсемпе паллашнă хыççăн ЧР çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Иван Исаев çапла каларĕ: «Кун пек музей Чăваш Енре тек çук. Ыттинче чĕр чун тĕнчипе çыхăннă çакăн чухлĕ экспонат кăтартмаççĕ. Экологи пĕлĕвĕ парас ĕçри тӳпи курăмлă. Музей пуласлăхне тишкерсе çитес ăрусем валли упраса хăварассишĕн Министрсен Кабинечĕ шайĕнче тăрăшăпăр».

■ **Юрий МИХАЙЛОВ.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем



● Н.Панченко. ● К.Арзамасцев.







*Физкультурник кунĕ: 75 çул*

# Халăх кăмăлланă уяв

*Тĕрлĕ профессиллĕ çынна тата общество пурнăçĕнчи пулăмсене халалласа çĕр-шывра çулталăк тăршшĕпех ятарлă уявсем паллă тăваççĕ. Çав шутра – Физкультурник кунне те.*

Физкультурăпа спорт тусĕсен уявĕ халĕ çурла уйăхĕн иккĕмĕш шăмат кунĕнче иртет. Анчах вăл яланах çак вăхăтра пулман: Совет Союзĕнче Физкультурник кунне пĕрремĕш хут 75 çул каялла, 1939 çулхи утă уйăхĕн 18-мĕшĕнче, паллă тунă. Ун пирки СССР Совнаркомĕ ятарлă йышăну та кăларнă. Кун-çул уттинчен юлма хăнăхман Чăваш АССРĕнче те çĕнĕ уява кăмăлласа йышăннă, çак куна тăрăшса хатĕрленнĕ. Акă, "Чăваш коммунĕ" хаçатăн 1939 çулхи утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче тухнă номерĕн ум статйине çаплах ят панă – "Физкультурник кунне тивĕçлипе кĕтсе илмелле". Çак тĕллеве пурнăçламашкăн Шупашкарта республика шайĕнчи пысăк ăмăртусем иртттернĕ, вĕсенче çăмăл атлетсем, ишекенсем, кимĕçсем лайăх кăтартусемпе савăнтарнă. Сăмахран, Алексей Студенецкий /каярах вăл паллă журналист пулса тăнă/ тăршшĕне сиксе палăрнă.

"Чăваш коммунĕ" хаçатăн утă уйăхĕн 18-мĕшĕнчи кăларăмне вара Физкультурник кунне халалланă. "Телейлĕ çамрăклăх кунĕ" ятпа çапăнса тухнă страницăра паллă спортсменсен сăн ӳкерчĕкĕсене пичетленĕ, уяв программипе паллаштарнă, пурне те Хĕрлĕ тӳремри чаплă парада тата автономи республикисен спартакиадине йыхравланă.

Асăннă спартакиада умĕн Шупашкарти "Темп" стадиона юсаса çĕнетнĕ, ытти аренăна та йĕркене кĕртнĕ. Спартакиадăра тăхăр республикăран пухăннă спортсменсем ултă кун стадионта, Атăл çинчи бассейнра, велокросра, тирта, баскетбол лапамĕнче тупăшнă. Çĕнтерӳçĕсемпе призерсен йышĕнче чылай команда пулнă, çапах та чи сумлă парнесене ытларах Тутарпа Чăваш республикисен спортсменĕсем çĕнсе илме пултарнă. Тутарсем командăсен хушшинче те çĕнтернĕ, пирĕн республика иккĕмĕш вырăна тухнă. Командăна чылай очко кӳнĕ спортсменсем: С.Бурашников, И.Ушаков, М.Гущина, А.Соболев, Л.Панова, Т.Петров, А.Студенецкий çăмăл атлетсем, Л.Николаева ишевçĕ, М.Самойлова кимĕçĕ тата ытти те.

Автономи республикисен Шупашкарти спартакиадине ВКП/б/ обкомĕн секретарĕ Т.Ахазов тата СССР Аслă Канашĕн депутачĕ, Совет Союзĕн Геройĕ П.Пумпур тивĕçлипе хакланă. 1939 çулхи утă уйăхĕн 18-мĕшĕнче Мускавра, ытти хулара та Физкультурник кунне асра юлмалла паллă тунă.

■ **Юрий ПЛОТНИКОВ, спорт журналисчĕ**

# Шыв çăмăлттайлăха каçармасть

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Вăл каланă тăрăх – районта 3-4-мĕш çул ĕнтĕ çак мелпе ĕçлеççĕ: çынсем пĕр шикленмесĕрех шыва кĕме пултарччăр тесе водолазсене чĕнсе илеççĕ, хăрушсăрлăх ытти мероприятине пурнăçа кĕртеççĕ. Шел, кăçал районта 40 урлă каçнă пĕр хĕрарăм путса вилнĕ. Ку инкек кану валли ятарласа хатĕрлемен вырăнта пулнă, шар курнăскер эрех ĕçни палăрнă. Пĕлтĕр вара 5 çын путнă, вĕсем пурте водолазсем тĕрĕслев ĕçĕсем иртермен çĕрте пурнăçпа сыв пуллашнă. Çав йышра икĕ ача пулни пушшех кулянтарать. Сăмах май, кăçал çĕртме уйăхĕнче районта ача-пăчан шывсенчи хăрушсăрлăхĕн уйăхлăхĕ иртнĕ.

Шыва кĕмешкĕн ятарласа хатĕрленĕ темиçе пĕве хĕррине çитсе килтĕмĕр. Макçикасси плотини канмашкăн чăнласах та лайăх вырăн пулнине курса ĕнентĕмĕр. Çăл куçсем тапса тăнăран шыв таса. Унпа юнашар волейбол вылямалли лаптăк тунă, ларса канмашкăн саксем вырнаçтарнă, сĕтел те пур. Информаци щичĕ те аякранах курăнать. Плотина тепĕр енче вара çветтуй çăл куç тапса тăрать, ăна пура лартса хăтлăлатнă. Унăн пĕр пайĕнче сăваплă шыва чăмса тухма май килет, тепринче вара сиплĕскере ĕçме тата савăтсене тултарса илсе кайма пулать. Кăшт çӳлерех – часавай. Акă Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан Петр Шатунов кунта тăтăшах сăваплă шыв илме килет, çанталăк шăрăх чухне плотинăна чăмса тухма та хирĕç мар. "Хамăр патра та шыва кĕмелли вырăнсем пур, анчах кунти тасарах пулнăран çакăнтах килетпĕр. Çăл куç шывне кашнинчех тултарса каятпăр, унпа апат пĕçерекен те сахал мар", – каласа кăтартрĕ Петр Вячеславович. Çăл куç патне вăл мăшăрĕпе тата хĕрĕпе килнĕччĕ. Çак тăрăхрах пурăнакан Николай Царев Макçикасси плотини 2010 çулхи шăрăхра та типменнине пĕлтерчĕ. Ку таврари çăл куçсем вăйлă тапса тăнăран тепĕр пĕве те тума май килнине палăртрĕ. Канмалли кунсенче кунта çывăхри ялсенчен çеç мар, хуларан та канма килеççĕ-мĕн. "Халăх халĕ ĕçре, пилĕк сехет иртсен самаях пухăнаççĕ", – терĕ Геннадий Любимов эпĕ шыва кĕрекен çынсене ӳкерес кăмăл пуррине систерсен. Акă пĕр хĕрарăм 4 мăнукĕпе килчĕ, чи кĕçĕннине мĕнлерех ишмеллине ăнлантарма пуçларĕ. Эпир малалла кайнă чухне ку плотина патне тепĕр икĕ машина çитсе чарăнчĕ.

Вомпăкасси пĕвинче ишсе-чăмпăлтатса тухнă арçын шыв сивĕреххине пĕлтерчĕ. Çыран тепĕр енчи ачасене çакă питех пăшăрхантармасть ахăртнех, вĕсем пулă пекех ишеççĕ. Кунти пĕвери буексем – çынсем хăйсем тĕллĕн ăсталанисем. Райадминистрацин ятарлă программăсен уйрăмĕн пуçлăхĕ пĕлтернĕ тăрăх – буексене чылай çĕрте татса пĕтернĕ иккен. Кама хытах чăрмантарнăши вĕсем? Вомпăкасси плотини çывăхĕнчи информаци щитĕнче халăхăн шывра хăйне мĕнле тытмаллине, вăл е ку лару-тăрура мĕн тумаллине ăнлантарса çырнă.

Хорнуй пĕви – районти плотинасенчен чи пысăккисенчен пĕри. Питĕ хитре вырăнта вырнаçнă вăл, юнашарах – вăрман. Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Манефа Колесникова эпир килнĕ вăхăтра çыран хĕрринчи ăпăр-тапăра пуçтаратчĕ. "Канма килекен çынсене хăйсем хыççăн тасатса хăварма ыйтас килет. Шыва кĕме тепре килсен, кирлĕ мар тĕрлĕ япала йăваланса выртнине асăрхасан хăйсен те кăмăлĕ хуçăлать вĕт", – терĕ ертӳçĕ. Манефа Валериановна çанталăк шăрăх тăракан тапхăр хăйне шухăшлаттаракан вăхăт пулнине пĕлтерчĕ. Пĕвесенче инкек ан пултăрччĕ тесе пăшăрханать вăл, çавна пулах ĕç хыççăн тăтăшах шыв хĕрриневаскать: ишсе-чăмпăлтатма мар, çынсем хăйсене йĕркеллех тытнине сăнама. Тепĕр чухне кимĕпе те тĕрĕслесе çаврăнать. Шывĕ кунта тарăн та таса, çавăнпа унта чăмса тухас тĕллевлисем те, пулă тытас ĕмĕтлисем те килеççĕ. Акă виçĕ арçын ача велосипедпа вĕçтерсе çитнĕ. "Кăнтăрла çын сахалрах. Кун каç еннелле сулăнмасăрах шыва кĕрекенсем пирки: "Ĕç çук-тăр вĕсен", – теççĕ. Ытларахăшĕ ĕç хыççăн тата канмалли кунсенче плотина хĕррине васкать", – калаçăва тăсрĕ М.Колесникова. Пуçлăх ку плотинăна 2011 çулта юсанине пĕлтерчĕ: вăл ял тăрăхĕн балансĕ çинче-çке. Çак территорири тепĕр икĕ пĕвешĕн вара ял хуçалăх пĕрлешĕвĕ яваплă иккен.

Çапла, çуллахи вăхăтра кӳлĕпĕве, юхан шыв хĕрринче лайăх. Çапах унта каннă чухне тимлĕх тата асăрханулăх пирки самантлăха та манас марччĕ, мĕншĕн тесен шыв çăмăлттайлăха каçармасть.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем



● Шатуновсем сăваплă шыв тултараççĕ.





*Тĕрĕслев*

# Саккуна пăсаççĕ

Шупашкарти Калинин районĕн прокуратури налук инспекцийĕпе пĕрле район территорийĕнче пассажирсене илсе çӳрес енĕпе ĕçлекен предпринимательсем ĕçлев саккунĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ.

РФ Ĕçлев кодексĕн 67 статйипе килĕшӳллĕн ĕçлекенсемпе çырса килĕшӳ тумалла. 68 статьяра çав килĕшĕве тĕпе хурса çынна ĕçе илнине ĕç параканăн хушу кăларса çирĕплетмеллине палăртнă.

Шел те, чылай предприниматель саккуна пăснине тупса палăртнă. В.Васильев, Л.Иванов, А.Иванов, С.Кузьмин, «Крокус Авто» ООО водительсемпе килĕшӳ туманнине тăрă шыв çине кăларнă. Ĕçлевĕн вăрттăн схемипе усă курни, ĕç укçин чăн виçине пытарни куç кĕрет. Çавна май тĕрĕслев кăтартăвĕсене тĕпе хурса район прокуратури административлă правăна пăсни çинчен калакан ĕçсем пуçарнă. Ку сферăри саккунлăха малашне те тĕрĕслесех тăрăпăр.

**Н.КИРКИНА,**
**Шупашкарти Калинин районĕн прокурорĕн пулăшуçи.**

# Çырана тасатнă

ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин çут çанталăк пуянлăхĕпе усă курассине тĕпчекен ăслăлăх тĕпчев экологи институчĕн сотрудникĕсем, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕсем, Шупашкар районĕнчи Сарапакасси ял тăрăхĕнчи Пикшик, Çатракасси ялĕсенче пурăнакансем утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче пĕтĕм Раççейри «Пирĕн юхан шывсемпе кӳлĕсен таса çыранĕсемшĕн!» акцие хутшăннă. Тĕп хула çывăхĕнчи Пикшик пĕвин таврашĕнчи йăлари хытă каяша сакăр кубла метр пуçтарса михĕсене тултарнă.

30-ăн ытла тӳлевсĕр тăрăшнă. Çак ушкăна Сарапакасси ял тăрăхĕнчи шыв-шур хĕрринчи пĕтĕм ăпăр-тапăра пухса пĕтерме çур çул кирлĕ. Шупашкартан пулă тытма çӳрекенсем Шорккапа Самуккасси ялĕсен хушшинчи, Хурăнлăх, Пикшик пĕвисен таврашне ăптăр-каптăр пайтах пăрахса тултарнă. Ял администрацийĕн пуçлăхĕ Павел Амурцев пĕр гектар çинче йĕрке тунăшăн та савăннă, экологин тепĕр акцине яланах хапăл.

**Ю.МИХАЙЛОВ.**

КУЛЬТУРА

# Илем тĕнчине уçакан ылтăн уçă

## /Ева Лисина пултарăвĕн вăрттăн тупсăмĕ пирки/

***"Вăхăта эпир иртни, хальхи тата пуласси çине уйăратпăр, – çырать Д.Лихачев "Письма о добром и прекрасном" кĕнекере. – Анчах та ас тăвăма пула иртни хальхине кĕрет, пуласси ĕлки хальхинче палăрать. Ас тăвăм – вăхăта çĕнтерни, вилĕме çĕнтерни. Ас тăвăм пĕлтерĕшĕ чи малтан çакăнта. Иртнине ас туни, Пушкин калашле, "çутă", поэзипе шăварăннă. Ас тăвăм çынра илем туйăмне вăратать, илеме туйма вĕрентет".***



М.Бахтин 1920 çулсенче çырнă "Автор и герой в эстетической деятельности" ĕçĕнче ас тăвăма илем тĕнчин алăкне уçакан ылтăн уçăпа танлаштарать, çынра илеме курни ăна вилĕмсĕрлетни пирки шухăшлать. Çичĕ томлă çырнисен пуххин 5-мĕш томĕнче Бахтин аслă ас тăвăм вилĕме хăйне май ăнланма тата хаклама май пани пирки çырать. "Çак ас тăвăм мана /тата манăн саманана/ хамран вăхăт тĕлĕшĕнчен иртме май парать. Хама хам çунтарни тата "эпĕ" тенине универсаллă саккунсене пăхăнтарни. Сăнарта мĕн çĕнни тата хастарри пурри йăлтах çав аслă ас тăвăма пула çуралать".

Аслă ас тăвăм тăвать те ĕнтĕ пултару çыннине вилĕмсĕр.

Ас тăвăм, аслă ас тăвăм – Ева Лисина таланчĕ, çут çанталăк пани. 1974 çулта тухнă "Хĕле кĕрес умĕн" кĕнеке хĕрарăм çыравçă аллинче ылтăн уçă пулнинех çирĕплетет. "Пуласлăхра вăрăм ас тăвăмлă çынсем хуçа пулĕç", – тет Фридрих Ницше. Лисина – пуласлăх çынни.

"Лисина хăй хушаматне тивĕçет, чее, хăй пирки кăна шухăшлать", – тенине илтме пулать. Ева Николаевнăна 1989 çултанпа пĕлетĕп. Кайринчен мала тухасси /Библи куçарас ĕçе чи кайран хутшăнать те – ертÿçĕ пулса тăрать/ чеелĕхпе çыхăнман пулĕ. Вăл пуласлăхран килнĕ хăна. Эпир пурăнакан вăхăтра Лисина хăйне хăнари пек тытать. Çавăнпа паянхи кун çыннисенчен хăш-пĕрне айванкка пек курăнать. Мăннисем кăна мар, ачасем те çакна туяççĕ. Ман архивра Ева Николаевнăн мăнукĕ, пĕчĕк Михаэль, калани упранать:

"– Асанне, ман калас килет. Анчах эс мана ăнланмăн та – вара кÿренĕн. Эп сана кÿрентересрен хăратăп.

– Çук, кÿренместĕп, кала.

– Асанне, эс айванккаран та айванкка пек курăнан мана. Ман йăмăкран та айванкка".

Çапла, Ева Лисина мăннисенчен кăна мар – ачасенчен те вăхăт тĕлĕшĕнчен маларах кайнă. Ева Лисина текен феномена ăнланас йывăрлăхсем çакăнтан та килеççĕ. Вăл витĕр курăнакан стильпе çырать. Унăн илемлĕ тĕнчи çиелтен пăхма ансат. Ансат япалана ăнланасси нуша тесе ахаль каламан. "Хĕле кĕрес умĕн" 1974 çулта тухнă. 1989 çулчен, эп тĕпчеме пуçличчен, кĕнеке пирки никам та хурласа та, ырласа та пĕр сăмах та çырман. Халĕ Лисинăн *илемлĕ тĕнчине пĕрпĕтĕмлĕ ăнланас, шалти пĕлтерĕше уçса парас* /М.Бахтин шухăшĕпе – литература тĕпчевçин тĕллевĕ çакă пулмалла та ĕнтĕ/ тĕлĕшĕнчен тунă ĕçĕме çĕнĕ сăмах тесе хакланă пулăттăм. Çыравçă тĕнчин тарăнăшне кĕмелли чылай май-меслетне палăртма, çул-йĕрне кăтартма май килчĕ.

Чăваш ССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи "Хисеп Палли" орденлă чĕлхе, литература, истори тата экономика наука тĕпчев институтĕнче /çапла ятлăччĕ ун чухне пирĕн институт/ 1990 çулта "Хальхи чăваш литератури: илемлĕ ăсталăх ыйтăвĕсем" кĕнеке тухрĕ. Вăл ман тĕпчевпе – "Хальхи чăваш литературинчи синкер тĕнче туйăмĕн хăш-пĕр тĕсĕсем" – уçăлать. Статьяра Ева Лисина пирки çырни пысăк вырăн йышăнать. Хĕрарăм çыравçа эп пысăк тата чăн литература контекстĕнче тишкертĕм, вăл ăста çыравçă пулнине ĕнентерме тăрăшрăм. Кĕнеке ман статьяпах вĕçленет. "Е.Лисинан "Çĕнья́л ачисем" повеçĕнчи импрессионизмла туртăмĕсем" – Чăваш литературинчи синкер тĕнче туйăм пирки те, импрессионизм çинчен те унччен çырман. Манăн тата Г.Федоровăн тĕпчевĕсенчен тăракан кĕнекен тиражĕ 500 экземплярччĕ. Эпĕ тĕпчевпе кăна лăпланмарăм – Ева Лисина ман проектсенчен пĕри пулчĕ. Проект тесе вулакан патне çитерме тунă ĕçсене калатăп /"раскрутка" сăмаха "çавăрттарнă" тесе куçармалла ахăртнех/. Проектсен шучĕ самай пысăк: Иван Юркин, Сергей Ялавин, Ефрем Еллиев, Виктор Рсай, Хумма Çеменĕ, Мĕтри Юман, Илле Тăхти, Юрий Скворцов, Петĕр Эйзин, Георгий Федоров, Иосиф Дмитриев тата ыттисем те. Вĕсене нихăшне те тивĕçлипе хакламан. /"Мана хĕстермен – мана ăнланман", – çапла палăртнăччĕ, тĕслĕхрен, И.Дмитриев хăй мĕншĕн тăван çĕр-шывне пăрахса Казахстана ĕçлеме кайнин сăлтавне/. Ăнланманнисене – ăнланма, вĕсен чăн хакне тата пĕлтерĕшне, чăн вырăнне ыттисене ăнлантарма тăрăшрăм. Тĕллев информаци тата фактсем шырасси марччĕ, "чирлеттерессиччĕ". "Санпа хутшăннă хыççăн, – тенĕччĕ Георгий Иосифович Федоров, – киле çитен те: сулахай кĕсьере – Юрий Яковлев, сылтăмминче Юрий Яковлев, пиншакăн шалти кĕсйинче те – Юрий Яковлев..."

Ева Лисинăпа ыттисене "чирлетерессипе" çитĕнÿсем турăм пулас. Ыттисенчен Вячеслав Оринован "Рия" спектаклĕ, Владимир Карсаковăн "Масар çумĕпе" фильмĕ, тен, пулмастчĕç. Анатолий Розов "Лупах хăлха Илюк" /Пукане театрĕ, Юрий Филиппов режиссер/ валли ăсталанă пукане-сем те чĕрĕлетчĕç-ши?

"Пирĕн йăли çавăн пек: малтан чикĕ леш енче чап илмелле – вара тин сана Чăвашра йышăнаççĕ", – тенĕччĕ аппликаци ăсти Дмитрий Жуков Ева Николаевнăн "Çăкăр чĕлли" калавĕ "Нимĕç хумĕ" радиостанци ирттернĕ конкурсра çĕнтерсен.

Çыравçăн тарăнăшне уçакан ĕçсем вăл Германире премии иличчен пĕр çул маларах тухрĕç. Ева Николаевна Шупашкара хăнана килмессерен /Мускавра пурăнатчĕ/ унпа шкулсенче, университетра, библиотекăсенче, хамăн тус-юлташпа тĕл пулу йĕркелеттĕм. Радио тата телекуравпа та тухса калаçатчĕ. Çамрăк хаçатçă-журналистсене те Лисина пирки çырма сахал мар хавхалантартăм. Ăна çавăн пек çĕклени чăваш çыравçисене килĕшместчĕ. "Лисинăна чăваш прозинче расна тăрать теме май çук", – çавăрттарса хучĕ Уяр. Федор Ермилович эп çырнисене, çыравçисене çĕклес тĕлĕшĕнчен тăвакан ĕçсене сăнаса тăратчĕ. Халь шухăшлатăп та: вăл мана тĕпрен ăнланнă иккен. "Ку теттепе хăçанччен вылян-ха ĕнтĕ?" – терĕ вăл пĕрре ман черетлĕ проект çинчен. Лисина пирки калани те тĕрĕссĕ.

"Хĕле кĕрес умĕн" шăпах вăл чăвашла кĕнеке пулнипе, чăвашлăх сывлăшĕпе тыткăнланăччĕ. Çĕн йĕркелÿпе килнĕ чĕрĕлÿ ун чухне пирĕн чĕресене шанчăк кĕртнĕччĕ. Чăн чăваш чĕмĕ чĕрĕлессе кĕтеттĕмĕр, çав чĕмĕн паллисене шыраттăмăр. "Чăн-чăн поэт, – çырнăччĕ Василий Энтип, – сăмаха чĕм кĕртет. Чĕм кĕртмен сăмах, темле-темле шăрçалантарсан, йĕрке хăваласа темле-темле тем те пĕр хайласан та, муриtlесе те хĕссе-пĕссе рифмăласан та, поэзи пулаймасть. Чĕм кĕртмен сăмах хĕсĕр те, техĕмсĕр те, сивĕ те, пушă та – чунĕ тухса тарнă ÿт-пÿ пек, юрату тухса кайнă кил-çурт пек – вуланă чух шăла шантаракан чăштăркка еверлех çеç: хайлавçисем хăйсем пелтĕк чĕлхеллĕ, хайлавĕсем кĕвĕсĕр те нĕрсĕр. Пĕчĕк инкекрен пысăк нуша туса найкăшсан та, темле е такамла курнăçланса ейкеленсен те, такам манерлĕ пулма пикенсен те, чăн чăнлăх мĕн иккенне нихçан ниепле тавçăрса илеймен поэтланакан çыравçă чăн-чăн поэт пулаяс çук. Чăн-чăн поэт вара – турă ĕçне малалла тăвакан сăмахпа пĕрле поэзи тĕнчине чĕм кĕртекен ăрăмçă".

Чĕм пирки калани Ева Лисинăшăн та тĕрĕс. Анчах вăл сăмаха чĕм кĕртмен, чĕмĕ хăй ун сăмахне кĕнĕ. Çак чĕм çыравçăран аслăрах пулнине кăтартма "Хĕле кĕрес умĕн" калаври пĕр сыпăк та çителĕклĕ. Чăваш чĕмне сăнарлакан ÿкерчĕк тĕнче шайĕнче. Вăл аслă вăхăтра пурăнать. Вăл – вилĕмсĕр:

"Талăк хушши чарăнмасăр çуса та хĕл мулĕ иксĕлмерĕ курăнать. Çĕньял çийĕпе паян та юр пĕлĕчĕ куçать. Тачка хутламсем вăраххăн, пăтрашăнмасăр, пурте пĕр еннелле шăваççĕ. Йывăçсем те – вĕсене аялти пĕлĕтсем хăйсем хыççăн туртнă евĕр – çавăнталлах тайăлаççĕ. Юр лаплата-лаплата ÿкет, авăнса аннă туратсем, юр пусăмĕнчен хăтăлса, çÿлелле-çÿлелле сике-сике илеççĕ. Ир çитрĕ çак юр. Çĕр те сивĕнсе çитейменччĕ, йывăçсем те çулçине тăкса ĕлкĕреймерĕç.

Хиртикасри Çинук инке ывăлĕ, Павăл, килкартине тухнă та, пуçне каçăртса, хăпарса тухнă куççульне аллипе сăтăрса, тÿпе таллкăшпе шăвакан пĕлĕтсем çине пăхса тăрать. Мĕн туса тăмалла ун çакăнта? Ун ирех наркăмăш илме каймаллаччĕ...

Аса илÿрен те, шухăшран та асăрханать паян Павăл. Çавах... Çавах...

Ĕнер ирпе юр çума пуçласаччĕ. Каç тĕлне пĕтĕм тĕнче улшăнчĕ: йывăççемпе хуралтăсем лапсăрккаланса ларчĕç, юр витмен вырăнсем янтал пек тăрса юлчĕç. Те кас вĕçĕсем юр пĕлĕчĕсемпе пĕрлешнĕ пек туйăннăран – Çĕньял тÿпепе çĕр хушшинчи хушăк пек курăна пуçларĕ".

Ева Николаевна Лисина 1939 çулхи утă уйăхĕн 26-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Именкасси ялĕнче учитель çемйинче çуралнă. Ачалăхĕ Çĕньялта иртнĕ. Геннадий Айхин тăван йăмăкĕ, утмăлмĕш çулсен ачи. Прозаик /11 кĕнеке авторĕ/, сăвăç, куçаруçă. Мускаври Тимирязев ячĕллĕ ял хуçалăх академине пĕтернĕ. М.Ломоносов ячĕллĕ медицина институтĕнче бионика лабораторийĕнче ĕçленĕ. Ют çĕр-шыв литературин Пĕтĕм Союзри библиотекинче аслă редакторта, тĕп библиографра 20 çул вăй хунă, çавăн пекех Мускаври Щепкин ячĕллĕ театр училищинче пулас чăваш артисчĕсене чăваш чĕлхине тата чăвашла тĕрĕс калаçма вĕрентнĕ. Хăй вĕренекенне, Александр Яковлев артиста, вăрçă тамăкĕнчен хăтарас тесе 1995 çулта Чечняра пулнă. 1987 çулта ачасем валли кăларнă кĕнекесен Пĕтĕм Союзри конкурсĕнче "Хупах хăлха Илюк" повеçĕн çыравçă иккĕмĕш премии илнĕ. 1991 çулта "Нимĕç хумĕ" радиостанци ирттернĕ конкурсра унăн "Çăкăр чĕлли" калавĕ 1680 хайлав хушшинче çĕнтернĕ. Çав калав тăрăх çырнă пьесăна Германири темиçе радиокомпани эфира кăларнă. Е.Лисина çул çÿреме юратать. Турцире, Польшăра, Германире, Швецире тата ытти çĕр-шывра пулнă. 1995 çулччен Мускавра пурăннă, халĕ – Шупашкарта.

1994 çултанпа Библие чăвашла куçарас тата редакцилес ĕçре вăй хунă. Ева Николаевнăна "иккĕмĕш И.Я. Яковлев" теççĕ.

■ **Юрий ЯКОВЛЕВ.**

Ю.ЯКОВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕ

---

***Микул ПУЛАР***

# Истори ишĕлчĕ-кĕсем

Улăп пекех-çке вăл Титан,
Танлаштарсан чăнах та тан...
* * *
Çăтмах пек йĕкĕлтет Тартар,
Çапах та эс унран, тар, тар...
* * *
Тупа тăвать сипленĕн
Гиппократ,
Пулсассăн йăнăш пур пĕр
ан хăрат...
* * *
Пачкипеле хурсан та
миллион
Тăрса ларайĕ урăх Илион.
* * *
Эдипшăн ваттисен сăмахĕ,
Вăлтнийĕ пулнă чун
хавалĕ.
* * *
Çĕрме пуян пулайнă Крез,
Ун çывăхне епле кĕрес?
* * *
Самсонăн вăйĕ пулнă
çÿçĕнче.
Далилăна мĕскер çитмен?
Тĕнче...
* * *
Ытла та нĕрсĕр пулнă тет
Сулла,
Çынсем çине вăл алă çеç
сулать...
* * *
Пичкере пурăннă Диоген,
Мана çăтмах унта та
теекен.
* * *
Çула тухмашкăн тахçанах
эп хатĕр –
Ăçта каяс?
Кичем çĕрте-çке пурăнма та
кансĕр –
Мĕскер тăвас?

Кайсассăн каялла, тен,
таврăнаймăп –
Кама ятлас?
Тăван çĕре ниçта та эп
манаймăп –
Чунран пулас...

Шур пĕлĕт пек кунсем шуса
иртеççĕ –
Çил вĕрнĕ май.
Мĕн пулнă-курнă йăлт аса
килеççĕ –
Вĕсем самай...
* * *
Çынсем пекех-çке
кайăксем,
Вĕçсе каяççĕ тăсталла та...
Канма пĕлеççĕ-ши вĕсем?
Çÿл тÿпере çук пĕр
турат та...

Хур-кайăксем çулне
пĕлеççĕ,
Çитес çĕре-çке çитмеллех.
Çĕрле те кăнтăрла
çĕтмеççĕ,
Тăван кĕтес туртать килех!

Ки-как, ки-как! сана ал
сулнăн
Вĕçет хур-кайăксен карти.
Пăхса тăратăн çунатланнăн,
Вĕсен те пур-мĕн çĕр
картти.

● ➡ 12 стр.

КУЛЬТУРА

# Чăвашсен уявĕ çеç мар

***Емельяново районĕнчи Шуваево ялĕ ир-ирех савăнăçлă шăв-шавпа тулчĕ. Культура çурчĕ умĕнчи тĕремре чăваш юррисем янăраççĕ, халăх пултарулăхĕн ăстисем хăйсен ĕçĕсен куравне йĕркелеме хыпаланаççĕ, сутуçăсем таварне мухтаççĕ, апат-çимĕç ăстисем тутлă çимĕçпе сăйланма йыхравлаççĕ… Кун çапла хавaслă пуçланни ахальтен мар. Красноярск чăвашĕсем утă уйăхĕн иккĕмĕш шăмат кунĕнче çирĕпленнĕ йĕркепе Акатуй ирттереççĕ.***






Кăнтăрла енне уяв хавасĕ тата та вăйланчĕ. Наци тумĕсене тăхăннă чăвашсем, вырăссем, нимĕçсем, белоруссем, латышсем, хакассем т.ыт. ташă картине тăчĕç, тĕрлĕ халăх юррисене шăрантарчĕç. Акатуй тахçанах Красноярск çĕрĕнче пурăнакан тĕрлĕ наци çыннин пĕрлехи уявĕ пулса тăнă ĕнтĕ. Аслă ўсĕмри чăвашсем çеç, ахăртнех, унăн малтанхи пĕлтерĕшне ас тăваççĕ. "Çак кун мăн асаттесем акана вăхăтра тата ăнăçлă вĕçленĕшĕн турра тав тунă, тулăх тыр-пул пухса илме пехил ыйтнă", – палăртрĕ Акатуйăн чăн пĕлтерĕшĕ пирки каласа кăтартнă май Красноярскри чăвашсен культура автономийĕн президенчĕ Г.Храмов.

Мĕнле уяв апат-çимĕç йывăрăшне чĕтаймасăр авăнакан сĕтелсĕр иртĕр? Акатуйра ĕçме-çиме питĕ тулăх пулчĕ. Хуплу, чăваш халăхĕн ытти çимĕçне тутанса пăхрĕç уява пухăннисем.

Акатуя Красноярск крайĕнчи 27 районта, 12 хулара пурăнакан чăвашсем хутшăнчĕç. Чăваш Енрен, Хакасран, Кемĕр, Томск, Иркутск облаçĕсенчен хăнасем килнĕ. Вун çичĕ лапамра тĕрлĕ эреш, ал ĕçĕсен куравĕсене йĕркеленĕ.

Мĕн пур коллектив пĕрле А.Никитинăн "Эй, тăвансем, тăвансем!" юррине юрласа уява вĕçлерĕ.

■ **О.ПЕТРОВ.**
Красноярск крайĕ

# Айхи ĕçĕпе – спектакль

***Мускавра, «Драматургипе режиссура центрĕ» театрта, Чăваш халăх поэчĕн Геннадий Айхин «Все то же прощание» произведенийĕпе лартнă «Поля входят в дверь» спектаклĕн премьери иртнĕ.***

Паллă ентешĕн сăввисене республикăра кăна мар, Раççейре, çавăн пекех тĕнчере те лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем, сăмахран, Клим аллине те лекнĕ. Кам-ха вăл? Клим – хальхи вăхăтри театршăн паллă пулăм, Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче – Петербургран пуçласа Хабаровск таран, Украинăра – Львовран Харькова çити – чĕрĕ театр тата драма тексчĕсен тĕлĕнмелли йĕркелўçи.

Спектакль – нумай çула тăсăлнă проектăн пайĕ. Проектпа килĕшўллĕн вицĕ моноспектакль пулмалла, анчах хальлĕхе иккĕшĕ çеç – «Возмездие 12» тата «Поля входят в дверь» кун çути курнă. Пĕрремĕш спектакльте Ксения Орлова, Наци театрĕнчи «Практика» тата «Мастерская» ĕçсенчи рольсемпе палăрнăскер, пилĕк сехете яхăн Александр Блокăн икĕ поэмине юрланă, иккĕмĕшĕнче Климăн чылай паллă спектаклне хутшăннă Наталья Гандзюк хăй хывнă кĕвĕпе пирĕн ентешĕн çирĕм ытла юррине шăрантарнă.

Икĕ спектакльте те икĕ çын çеç, вĕсен сасси, çутă пайăркисем тата пушă вырăн… Çакăн пек майпа та Тăван çĕр-шывăн кун-çулне ўкерме пулать-мĕн. «Российская газета» палăртнă тăрăх – пĕрремĕш спектакль театр трагеди жанрĕпе чăнласах ĕçлеме пуçланине çирĕплетекен пулăм.

Чăваш Республикин РФ Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ Леонид Волков хăйĕн салам сăмахĕнче çак шухăша палăртнă: «Премьера чăваш культуришĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен ăна чăвашсен тата вырăссен паллă поэчĕн произведенийĕ никĕсе хывса лартнă. Драматургипе режиссура центрĕ нумай çул ĕнтĕ Раççей театр искусствине аталантарас ĕçе пысăк витĕм кўрет. Унăн ĕçĕсем хăй евĕрлĕхĕпе палăрса тăраççĕ. Театр – Раççейĕн нумай нациллĕ халăхĕн кăмăл-сипет аталанăвĕн çăл куçĕ, искусствăн пултарулă та çамрăк ĕçченĕсен лаççи».

Полпред çавăн пекех асăннă театр чăваш писателĕсемпе поэчĕсен ĕçĕсем патне татах таврăнасса шаннине палăртнă, коллектива ăнăçу суннă.

Палăртса хăварар: Геннадий Айхи – тĕнчери поэт-авангардистсен хушшинче паллă тата нумай пичетленекенсенчен пĕри. Вăл Чăваш Енри Патăрьел районне кĕрекен Çĕньялта çуралса ўснĕ, Андрей Белый, Пастернак, Франци Академийĕн премийĕсене, Петрарка ячĕллĕ премие тивĕçнĕ, çавăн пекех литературăпа искусство Орденĕн командорĕ.

Геннадий Николаевич тĕнче поэзине чăвашла куçарас енĕпе нумай ĕçленĕ, «Поэты Франции», «Поэты Венгрии», «Поэты Польши» антологисем хатĕрлесе кăларнă. Тăван литературăпа культурăна пропагандăлас тĕлĕшпе вăл пурнăçланă ĕçсем вышкайсăр пысăк. Поэт «Чăваш поэзин антологине» хатĕрленĕ, ЮНЕСКО витĕмĕпе ăна Англире, Венгрире, Италире, Францире, Швецире пичетленĕ. Геннадий Айхи куçарăвĕсем урлă эпир тĕнче литературипе çывăхланма пултартăмăр. Хăйĕн сăввисене те темиçе чĕлхене куçарса пичетленĕ, тĕрлĕ чĕлхепе унăн 100 ытла кĕнеке çапăнса тухнă.

■ **Надежда СМИРНОВА**

*Кану*

# Ентешсем ăçта реххет кураççĕ?

***Çуллахи шăрăх кунсенче тĕнчери паллă «çăлтăрсем» мĕн тăваççĕ тетĕр? Паллах, çичĕ тинĕс леш енче канаççĕ, çунтарса ярасла пĕçертекен хĕвел айĕнче хĕртĕнеççĕ. Раççейрисем те вĕсенчен юласшăн мар, тĕрлĕ çĕр-шыври чаплăран та чаплă кану вырăнĕсене çитсе килме васкаççĕ. Пирĕннисем, Чăваш Енри паллă çынсем, культура, искусство ĕçченĕсем, çак шăрăх кунсене еплерех ирттереççĕши?***

**Нина ЯКОВЛЕВА, Раççей халăх артистки:**

– Отпуска тата икĕ кунран çеç каятпăр. Театрта чаршав хупăнни артистсем ĕçсĕр ларнине пĕлтермест. Сезон вĕçленчĕ пулин те эпир çав-çавах çул çинче. Çĕртме уйăхĕнче пысăк ушкăнпа Эрĕнпур хулине çитсе килтĕмĕр, федерацин Атăлçи округĕнчи наци фестивальне хутшăнтăмăр.

Валерий Карпов Сергей Найденовăн «Дети Ванюшина» пьесипе «Ашшĕн ачисем» спектакль лартать. Унта манăн пĕчĕк роль – Кукарникова сăнарĕ. Премьера çĕнĕ сезонра пулĕ. Унччен хамăн çĕнĕ ĕç пирки шухăшламалăх вăхăт пур-ха.

Кăçал хваттерĕн пĕр пайĕнче – коридорта – юсав ĕçĕсемпе аппалантăм. Пĕчченех. Мана çакă йывăра килмерĕ, хамăн ĕçе пăхса савăнатăп. Сăрă шăрши иртсе те пĕтмен-ха. Куçарнă япаласене халĕ хăйсен вырăнне майлаштарса лартатăп.

Çак кунсенче Мускавран вунă класс пĕтернĕ мăнукăм Алика килмелле. Унпа хула çывăхĕнчи дачăна çўрĕпĕр. Унта ытларах – чечексем, темиçе йăран пахча çимĕç çитĕнет. Сухана, кишĕре, хăяра лавккаран та туянма пулать-ха, анчах пахчана юхăнтарса ярас килмест, кўршĕсенчен намăс.

Ватăлсан канма вăхăт çук, çамрăк чухне пушă самантпа меллĕ усă курма тăрăшмалла.

**Светлана АСАМАТ, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, сăвăç:**

– Эпĕ халĕ отпускра çеç мар, тивĕçлĕ канура. Апла пулсан та кирек мĕнле çанталăкра та алăра ĕç пур. Çак кунсенче Атăл леш енчи вăрмантан хурăн тата хура çырласене витри-витрипе татса килтĕм. Шăнтса та, савăрласа та хутăм.

Шыва кĕме Атăла, Мари Республикинчи Таир кўллине кайнă. Унтах пулă та тытнă, тăвансен мунчи валли çăка, хурăн, юман милĕкĕсем хатĕрленĕ. Реххет мар-и?

Пултарулăх та манăçа юлмасть. Çанталăка пăхмасăр ачасем валли çырнă сăвăсене, аслисем валли хайланă ĕçсене «тăн кĕртетĕп». Çĕнĕ юрăсем те хывăнчĕç, вĕсене халăх çине кăларма ĕмĕтленетĕп. Ман хваттерте кулленех баян сасси янăрать. Кăмăлăм та çанталăк пек ăрша сассипе киленет.

**Николай КАЗАКОВ, Чăваш патшалăх филармонийĕн директорĕ, ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Чăваш Республикин Патшалăх премийĕн лауреачĕ:**

– Отпуска яланах тăван ялта – Тăвай районĕнчи Тăрмăшра – ирттеретĕп. Тĕп килте аппа пурăнать, эпĕ вара ăна çывăхри çурта туянтăм. Çĕнĕ пўрт туса унта пурăнма пуçланă ĕнтĕ, çапах та вак-тĕвек юлнă-ха. Паян акă кил-çурт çывăхĕнчи лаптăка тикĕслетĕп, çĕр йăтатăп. Пўртре пур услови те пур, хулари пекех. Мунча та питĕ шеп.

Маншăн кăнтăр – Тăрмăшра. Мăшăрăм вăхăтне ытларах мăнуксемпе ирттерет, пианино калама вĕрентет.

**ЧР, Раççей культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Татьяна ШАРКОВА** ўнерçĕ патне те шăнкăравларăм. Хваттерти телефонĕ патне пыракан пулманран кĕсье телефонĕпе усă куртăм. «Эпĕ халĕ Грецире канатăп», – терĕ Татьяна Васильевна кăмăллă сасăпа. Мĕнех, эпĕ уншăн чунчĕререн хĕпĕртерĕм. Çакна тивĕçлĕ вăл: çулталăк пуçламăшĕнче «Халăх ăстисен опытĕнчен» ярăмпа ун çинчен «Чувашские вышивки и куклы Т.Шарковой» /авторĕ Г.Орков-Иванов/ кĕнеке кун çути курчĕ. Çĕнĕ ĕçе пуçăниччен янкăр тўпери вĕри хĕвел айĕнче хĕртĕнме, Вăта çĕр тинĕсĕнче пулă пек ишме тĕв тытнă художник.

■ **Надежда СМИРНОВА**
**ыйтса пĕлнĕ**




# Çамрăксем ĕçпе хӳтĕлеве хатĕрленеççĕ

***Пирĕн çĕр-шывра «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» физкультурăпа спорт тытăмĕн нормативĕсене чĕртсе тăратас тĕллевпе кăçал старт илнĕ ятарлă проект кунран кун вăй илет. Спортпа туслисен йышне ӳстерме пулăшакан, çамрăксене сывă пурнăç йĕркине пăхăнма хăнăхтаракан юхăм Чăваш Енре те пĕрремĕш утăмĕсене тăвать.***

Темиçе уйăх каялла Кӳкеç поселокĕнче ГТО нормативĕсене пурнăçлас енĕпе республика фестивалĕ иртнĕччĕ. Унта 10-мĕш класра вĕренекенсем хутшăннă. Акă çак кунсенче Шупашкарти Мускав районĕн çамрăкĕсем те ГТОпа паллашас тĕллевпе физкультурăпа спорт фестивальне пухăнчĕç. Спортпа туслисем чупас, тăршшĕне сикес, мечĕк ывăтас, турник çинче туртăнас, кире пуканĕ йăтас, автомата салатса пуçтарас тата ытти енĕпе хăйсен вăйне тĕрĕслерĕç. Çĕнĕ юхăма мĕнле хаклатăр? Кирлех-и вăл сире? Нормативсене пурнăçлама пултаратăр-и? Çак ыйтусемпе «тертлентертĕм» кану паркне пухăннă яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа.

**Алексей Пантелеймонов, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕ, пулас юрист:** «Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр» физкультурăпа спорт тытăмĕ çинчен ача чухнех илтнĕ. Эпир шкулта вĕреннĕ тапхăрта ГТО нормативĕсем çукчĕ пулин те темшĕн çак тытăм кăсăклантаратчĕ. Çавăнпах ăна чĕртсе тăратас ĕç пуçарнăшăн савăнтăм. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнаканшăн çак тытăм питĕ пĕлтерĕшлĕ, тăпсене те ку юхăма явăçтармалла. Нормативсене вара пĕрремĕш хут «iВолга» форумра пурнăçларăм, манăн çитĕнĕве «пиллĕк» паллăпа хакларĕç».

**РФ халăх хуçалăхĕпе патшалăх службин академийĕн Шупашкарти филиалĕн «Студентсен тĕнчи» хаçатăн редакторĕ Юлия Антонова:** «Ачаранпах спортпа туслă, халĕ те кашни кун парка чупма тухатăп. Шкул чысне тĕрлĕ ăмăртура хӳтĕлеттĕм, халĕ аслă шкулăн командишĕн тупăшатăп. ГТО юхăм вăй илнине ырлатăп. Тĕрлĕ норматива пурнăçлама тăрăшакана спортпа туслашма хавхалантаратех. Çĕнĕ тытăм малашне сывă ăру çитĕнтерме те пулăшĕ, ачасене киревсĕр йăларан хăтăлма май парĕ. Турник çинче туртăнасси, темиçе метр чупасси... маншăн йывăр мар, çавăнпа эпĕ пĕрре те шиклenместĕп».

**Интернет агентствы ĕçченĕ Ирина Батченко:** «ГТО çынсене хастартарах пулма май парĕ. Ăна лайăх пурнăçлассишĕн чылайăшĕ спорт лапамне ытларах çӳреме тăрăшĕ, хăш-пĕрне спортзала кайма хавхалантарĕ – çакă мĕнпе япăх. Хам эпĕ çакнашкал мероприятие пĕрремĕш хут хутшăнатăп. Паллах, малтанлăха йывăртарах».

**Александр Захаров, фотоӳнерçĕ:** «Хамăн кунăма эпĕ зарядкăран пуçлатăп. Кăмăл-туйăм çĕкленӳлли ĕçлеме вăй-хăват парать. Çапах та ГТО нормативĕсене пурнăçлама çăмăл мар. Спортăн тĕрлĕ енĕпе ăсталăха туптани питĕ пĕлтерĕшлĕ».

**Александр Налимов, юсав ĕçĕн маçтăрĕ:** «Арçынсемпе каччăсен ялан вăйлă та паттăр пулмалла. Эпĕ те спортпа туслă. Уйрăмах футболла выляма юрататăп, штанга йăтса ӳт-пĕвĕме çирĕплететĕп. Çавăнпа ГТОн ылтăн палли манăн алăра пуласса шанатăп. Чăваш Ен спорта аталантарас енĕпе ăнăçлă ĕçлекен регионсенчен пĕри, республикăра пурăнакансем те йывăрлăхсенчен хăрамаççĕ».

**Олег Никифоров, «Общество хисепĕ» преми лауреачĕ:** «Çĕнĕ юхăма çул пани паянхи кун, тĕрлĕ киревсĕр вăй-хăват йăл илнĕ тапхăрта, питĕ пĕлтерĕшлĕ. Вăл çынсене сывă пурнăç йĕркине пăхăнма вĕрентĕ. Çав вăхăтрах кашни хăйне уйрăм çын пулнине манмалла мар: тĕслĕхрен, спорт мĕнне пĕлмен çамрăкран çирĕп ыйтни сывлăхне хавшатма пултарать. Маншăн, шкул çулĕсенчех физкультура урокĕсене хаваспах çӳренĕскершĕн, ГТО нормативĕсем йывăр мар».

# Хамăршăн мар пулсан та – пирĕн

***Чăваш Енре çуралса ӳснĕ, республикăри спорт шкулĕсенче ăсталăха туптанă, вĕренӳ учрежденийĕсенче пĕлӳ илнĕ, анчах та хальхи вăхăтра тĕрлĕ çĕр-шыв е регион чысне хӳтĕлекен спортсмен сахал мар.***



Чи паллисем – 2006 çулта хĕллехи Олимп вăййисенче бронза медаль çĕнсе илнĕ биатлонçă Лилия Ефремова /Шупашкар/, ирĕклĕ мелпе кĕрешсе 2008 çулхи Олимпиадăра палăрнă Ольга Смирнова /телее, Çĕнĕ Шупашкар пики тăван ене каялла таврăнчĕ/. Вĕсем Украинăпа Казахстан командисен пухмачĕсене чылай наградăпа пуянлатнă. Çак йыша ыттисене те кĕртме май пур. Пур пĕр паян та эпир вĕсен çитĕнĕвĕсемшĕн савăнатпăр. Акă темиçе уйăх каялла Çĕнĕ Шупашкарти спорт керменĕнче иртнĕ çĕр-шыв чемпионатĕнче Канаш районĕн пики, хальхи вăхăтра Брянск хулинче пурăнакан Алина Морева /Анисимова/ кĕрешӳçĕ çĕнтерчĕ. Çак кунсенче Шăхасан хĕрĕ тĕнче чемпионатĕнче бронза медаль çĕнсе илнĕ. Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 5-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптанăскер пĕлтĕр те Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ çĕр-шыв кубокĕнче чемпион ятне тивĕçнĕччĕ.



Ирĕклĕ мелпе кĕрешес енĕпе палăрнă тепĕр ентеш вăл – Шупашкар хĕрĕ Наталья Гольц. Олимп резервĕсен училищинчен вĕренсе тухнă пике Европа чемпионатне пилĕк хут парăнтарнă, Пекинри Олимпиадăна хутшăннă. Вăлах – Тĕнче кубокĕн çĕнтерӳçи, тĕнче чемпионачĕн бронза призерĕ. Мускаврa пурăнаканскер нумаях пулмасть Испанире спорт кĕрешӳçисен гран-прине çĕнсе илнĕ.




Олимп чемпионĕ Валерий Ярды ячĕллĕ спорт шкулĕн воспитанникĕ Александр Григорьев та Мускавра пурăнать, вăл – «Раççей вертолечĕсем» велокомандăн хастарĕ. Спортсмен пĕрремĕш утăмсене ашшĕ Вениамин Григорьев пулăшнипе тунă, Надежда Бикбова тренер патĕнче ăсталăха туптанă. Раççей патшалăх физкультура университечĕн студенчĕ велосипедçăсен çак кунсенче вĕçленнĕ çĕр-шыв чемпионатĕнче ушкăнсен тупăшăвĕнче /166,5 км/ иккĕмĕш вырăн йышăннă.

*Пĕтĕм Раççейри турнир*

# Пултаруллă велосипедçăна асăнса

Алексей Трофимов Вăрмар тăрăхĕнчи чи пултаруллă велосипедистсенчен пĕри пулнă. Мăнçырмара çуралса ӳснĕскер районти спорт шкулĕнче ăсталăха туптанă, Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕреннĕ. Район чысне республика тата çĕр-шыв турнирĕсенче ăнăçлă хӳтĕленĕ. Шел те, спортсменăн пурнăçĕ 16 çултах вăхăтсăр татăлнă.

1998 çултанпа районта ăна асăнса ăмăрту йĕркелеççĕ. Малтанхи çулсенче турнира Вăрмар тăрăхĕнчи пултаруллă велосипедçăсем кăна хутшăннă, паян унта çĕр-шыври тĕрлĕ регион спортсменĕсем те вăй виçеççĕ. Кăçалхипе 17-мĕш хут иртнĕ Пĕтĕм Раççейри ăмăртура Чăваш Енри Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Патăрьелпе Вăрмар тăрăхĕсен, Мускавпа Санкт-Петербург хулисен, Чул хулапа Омск облаçĕсен, Краснодар крайĕн, Тутарстанăн каччисемпе хĕрĕсем – 170 ытла спортсмен – кросс-кантри енĕпе тата марафонра вăй виçнĕ.

Турнирта Мурманск облаçĕн, Ижевскпа Самар хулисен, Казахстан, Байкал тăрăхĕнчен килнĕ велосипедçăсем уйрăмах хастар пулнă. Алексей Трофимовăн ентешĕсем те – Вăрмарти А.Федоров ячĕллĕ спорт шкулĕнче ăсталăха туптакансем – палăрнă: дистанцисене пĕрремĕш вĕçлесе Мария Чубуковăпа Даниил Александров чи пысăк наградăсене тивĕçнĕ. Çавăн пекех ăмăртура Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ командин спортсменĕсем, Шупашкарти Олимп резервĕсен 7-мĕш спорт шкулĕнче вĕренекен Никита Терешкинпа Вячеслав Соколов малти вырăнсене йышăннă.



**Андрей МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

# Асăмри Кронид Прокопьев

Хаçатри сăн ӳкерчĕк – пурнăçри пĕр самант, уйрăм çынпа е ушкăнпа пурнăç илемĕпе тата тасалăхĕпе пĕр пĕтĕмленнĕ курăмлă чăнлăх. Кирек мĕнле вулакан та алла хаçат тытсан чăн малтан сăн ӳкерчĕксене пăхать, хак парать. Камсем унта? Клише айне мĕн çырнă? Манăн шухăшăмпа – вулакан хаçатри сăн ӳкерчĕке çыравçăн хайлавĕ пекех чăннăн та тĕрĕссĕн йышăнать.

Сăн ӳкерчĕксем тăвакан ăстапа, Сĕнтĕрвăрринчи «Ленин ялавĕ» /1994 çултанпа «Пирĕн сăмах»/ районхаçат фотокорреспонденчĕпе Кронид Прокопьевпа эпĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен вĕçĕнче Пичет çуртĕнче паллашнăччĕ. Сĕнтĕрвăрринчен Шупашкара, тулли автобусра хĕсĕнкелесе тăрса, кун сиктерсе тенĕ пек сăн ӳкерчĕкĕсене типографире клише тутарма килсе çӳретчĕ вăл. Мĕн тери канăçсăр ĕç!

Пурне те килĕшетчĕ вăл, пурте хисеплетчĕç ăна. Коридорсенче васкамасăр утса çӳретчĕ: фотоаппаратпа, пĕчĕк хура сумкăпа. Яка та тап-таса. «Коммунизм ялавĕнче» уйрăмах Георгий Зиньков фотокорреспондент пӳлĕмĕнче вăрах чарăнса тăратчĕ. Унта «Советская Чувашия» хаçатра ĕçлекен паллă фотохудожник Валентин Шемаров пыратчĕ. Канашлатчĕç вара, Кронид Прокопьевич сăн ӳкерчĕкĕсене тĕплĕн пăхса тишкеретчĕç. Ун чухнехи хĕрӳ вăхăтра хăй кăмăлĕпе пĕр килнĕ пурнăç чăнлăхне сăн ӳкерчĕксенче кăтартма пĕтĕм ăсталăхне паратчĕ вăл.

«Фотожурналист объективĕнче – пĕтĕм тĕнче, – тенĕччĕ Кронид Прокопьевич пĕр калаçура. – Эпир куллен куракан, пирĕнпе юнашар пурăнакан çынсем, тӳпе, тăван тавралăх... Çак тĕнче мĕн пур сăрăпа, ытарайми илемпе ялкăшса тăрать. Пурте куратпăр ăна. Ĕçри çын сăн-пичĕ мĕн тери илемлĕ! Çав саманта «тытма» ĕлкĕрмелле. Манăн ĕç – çак илеме тупасси, ăна халăха кăтартасси».

Çапла, этем ялан илем енне туртăнать. Илемре – унăн çынлăхĕ, тасалăхĕ, тĕрĕслĕхĕпе вилĕмсĕрлĕхĕ. Утмăлмĕш çулсенче Кронид Прокопьев Андриян Николаев космонавт летчикпа тата Анатолий Тогаев композиторпа çывăх паллашса туслашнăччĕ. Вĕсен сăн ӳкерчĕкĕсем нумайччĕ. Пĕр ӳкерчĕкре композитор хăйĕн вĕренекенĕ Оля Рязанцева пĕчĕк пӳрнисемпе пианино тӳмисене пуснă самантра ачашшăн тытнă. Пичĕ-куçĕ канăçсăр. Çамки çинчи юн тымарĕсем туртăнса карăннă. Мĕн чухлĕ шухăш, мĕн тери черченкĕ туйăм... Сăн ӳкерчĕк – «Пĕрремĕш урок» ятлă. Ăна республикăри выставкăра, унтан Мускаврта РСФСР Культура министерстви йĕркеленĕ «Россия – родина моя» куравра кăтартнăччĕ. «Пĕрремĕш урок» – Кронид Прокопьевăн ăсталăх тӳпине хăпармалли, ăсталăх шайне ытти ăстаçăсемпе танлаштарса, тĕплĕн пахаласа пăхмалли сăн ӳкерчĕк пулчĕ. «Ăнăçу – тимлĕ фотографшăн лайăх вĕрентекен», – тенĕ Америка фотографĕ, историкĕ тата сăн ӳкерчĕксен критикĕ Джон Жарковский.

Кронид Прокопьев 1939 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Кĕлейкасси Туçара çуралнă. Ашшĕ Мускава хӳтĕлесе паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунă. Çемьере вăл аппăшĕпе Райăпа, йăмăкĕпе Любăпа ӳснĕ. Вăкăр, лаша кӳлме ачаран вĕреннĕ. Колхозра ĕçленĕ, элеватора тыră турттарнă. Суха пуç туртнă, унтан плуг тытнă. Йĕкĕрварти вăтам шкултан вĕренсе тухнă.

1951-1954 çулсенче Ташкент çывăхĕнче çар тивĕçĕсене пурнăçланă. Лайăх салтак пулнăшăн ăна çар чаçĕн командирĕ «Смена» фотоаппаратпа чысланă. Часах вăл унăн тӳмине çăмăллăн пусса хăйĕн юлташĕсене ӳкерсе илнĕ. Çак самант ыр кун, телейлĕ сехетре пулнă-тăр – Леонид Прокопьев фотоаппарата хăйĕнчен текех хăварман.

Çартан вăл ӳнер шкулне вĕренме кĕрес кăмăлпа таврăннă. Хĕл каçа ялти колхозра ĕçленĕ, фотоаппаратпа ӳкерме хăнăхса çитнĕ, пушă вăхăтра шкул кĕнекисемпе ларнă. Çуркунне Шупашкара килнĕ, аслă шкулсене пăхса çӳренĕ, ӳнер училищине кĕрсе курнă. Çурчĕсене те асăнмалăх ӳкерсе илнĕ. Анчах вĕренме кĕме майсем пулман: килте амăшĕ те сывă мар, укçа-тенкĕпе пулăшакан та çук.

Кронид Прокопьевичпа паллашнă çулах эпир унпа чăваш художникĕсем çинчен калаçса кайнăччĕ. Эпĕ ăна Шупашкара Красноярск крайĕнчен хăнана килнĕ Владимир Мешков художник мана каланă сăмахсене персе ятăм: «Художник маляр цехĕнче ĕçлекен çын мар, вăл шухăшсен цехĕнче вăй хурать», – çирĕплетрĕ Владимир Ильич», – терĕм. Вăл чĕнмерĕ, икĕ-виçĕ эрне редакцире ман пӳлĕме те кĕмерĕ. Вун-вун çул иртсен çеç ăнлантăм: кӳреннĕ иккен. Вырăнсăр сăмах тунă эпĕ...



Алла паспорт илсен 1958 çулта Кронид Прокопьевич Сĕнтĕрвăрринчи ирĕклĕ пушар дружинине ĕçе кĕнĕ. Икĕ çул малярта ĕçленĕ, сăрă шăршине куççуль тухиччен ăша илнĕ. 1960-1963 çулсенче вара Сĕнтĕрвăрринчи пионерсен çуртĕнче фотокружок ертсе пынă. Ку ĕç – чун киленĕçĕ: анлă Атăл çинчи вĕтĕ-вĕтĕ хумсем, вăрманти уçланкăсем, çырмаçатраллă Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕ... Ачасене илеме туйма, сăн ӳкерчĕксем тума вĕрентнĕ, хăй те ăсталăхне ӳстернĕ.

Çамрăк ăстаçăна районĕçтăвкомра ĕçлекенсем те асăрханă. Ăна пĕр тăхтаса тăмасăр йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комбината чĕнсе илнĕ. Икĕ çултан, 1965 çулта, «Ленин ялавĕ» хаçат редакцийĕнче фотокорреспондентра ĕçлеме пуçланă. 1969 çулта ăна СССР Журналистсен союзне илнĕ.

...Ун чухне район хаçатĕнче пĕр сăн ӳкерчĕк çапса кăларма та пысăк нуша пулнă. Чи малтан пĕр-пĕр яла çитмелле. Кама ӳкересси пирки колхоз председателĕпе е партком секретарĕпе калаçса татăлмалла. Вăл мĕнлерех çын пулни пирки ыйтса пĕлмелле. Кампа пĕрле юнашар ӳкерме юранине те шута илмелле. Вара вĕсене шыраса тупмалла. Ăçта тата мĕнле çи-пуçпа ӳкерчĕк тăвасси пирки те пуç ватмалла. Ялан васкамалла, редакцие хăвăртрах таврăнмалла. Ĕç çыннин чун-чĕрин ырлăхĕ, ыранхи телейлĕ куна шанни, шалти хевтипе тулаш хитрелĕхĕ – акă Кронид Прокопьевăн сăн ӳкерчĕкĕсен курăмлă пĕлтерĕшĕ.

Хаçата йĕркеллĕ кăларма икĕ-виçĕ е ытларах сăн ӳкерчĕк кирлĕ. Пур çĕре те çитме ĕлкĕрмелле. Транспорт çук тесе нихăçан та кутăнласа ларман вăл. Автобуспа е хăйĕн шанчăклă велосипечĕпе çула тухнă. Район тăрăх çуран та сахал мар çӳренĕ. Малтанхи виçĕ çулта кунне-çĕрне пĕлмесĕр мĕн чухлĕ сăн ӳкерчĕк туман-ши вăл? Районти пĕр мероприяти те вăл хутшăнмасăр иртмен. Уншăн канмалли кун та пулман. Пултарулăх тарĕ юхнă та юхнă...

Пурнăçа ăнланса пурăннă Кронид Прокопьев. Табак туртман, ĕçкĕпе иртĕхмен. Пĕлнĕ: çăкăра – виçе, сăмаха – тытни, укçана шутлани кирлĕ. Сĕнтĕрвăрри хĕрринче пилĕк стеналлă йывăç çурт туса лартнă вăл. Илем шыракан илем тупатех çав. Çĕнĕ Шупашкарта ăнсăртран Кĕлейкассинчи кӳршине, икĕ кил урлă пурăннă çырла пек хитре Зоя Никифоровăна, тĕл пулнă. Пĕрле выляса ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ. Аслă классенче савнă, вăрттăн юратнă та ăна. Вун ултă çул курман – чунсене çунатлантаракан тĕл пулу! Зоя Никифоровна Кузбасри политехника институтĕнчен вĕренсе тухнă, «Химпром» производство пĕрлешĕвĕнче мастерта ĕçленĕ. Вăхăт нумай та иртмест – юратакан чĕресем пĕрлешеççĕ...

Район хаçатĕнчи фотокорреспондент ĕçĕ çăмăл мар. Ӳкерсе килтĕн çеç мар, ăна кăлармалла-çке-ха. Йĕркеллĕ лаборатори те çук, шывне те урамри колонкăран витрепе çĕклемелле. Сăн ӳкерчĕксене тирпейлĕ типĕтмелле. Редактор е яваплă секретарь аллине çитермелле. Çав хушăрах ăçта кăна кĕтмеççĕ ăна? Çамрăксен туйĕнче, ача ятне хунă çĕрте, стадионта, шкулсенче, ача садĕнче. Яланах хулара та, районта та çынна кирлĕ çын пулнă ăстаçă.

Унăн фотокартинисенче – Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнчи илемлĕ вăрмансем, хитре пейзажсем, тĕрлĕ сăнсем, тĕрлĕ сăрăсем. Çĕршыври паллă çынсене халалласа миçе фотоальбом хатĕрлемен-ши Кронид Прокопьевич? «Марпосадкабель» завод çурални», «Районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсем», «Андриян Николаев космонавт летчик», «Атăл илемĕ», «Андрей Эшпай композитор»... Унăн архивĕнче вун-вун километр фотопленка упранать.

Кронид Прокопьев сăн ӳкерчĕкĕсем республикăри хаçат-журналта пичетленсех тăратчĕç. Вĕсене хурланине нихăçан та илтмен.

– Пĕррехинче пире, район хаçачĕсен яваплă секретарĕсене, Йĕпреç районĕн «Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакцие ĕçлĕ тĕл пулăва пуçтарнăччĕ, – аса илнĕччĕ «Пирĕн сăмах» хаçатăн яваплă секретарĕ Раиса Захарова-Петрова. – Унта Сĕнтĕрвăрринче тухакан хаçатра сăн ӳкерчĕксене çав тери пысăка хурса хакларĕç. «Курăр-ха, хаçатра пичетленнĕ çынсен сăн-пичĕсене. Вĕсенчен куç илес килмест, çав тери илĕртӳллĕ. Кунта чăнахах та хăйĕн ĕçĕн ăсти ĕçлет», – терĕ Раççей Пичет министерствин тишкерӳçи.

Кронид Прокопьевич П.Сымкин, О.Мальцев, С.Журавлев, С.Игнатьев, Б.Иванов, В.Исаев, И.Клочков, В.Романов тата Г.Верблюдов фотожурналистсен ĕçĕсене ырлатчĕ. Тĕрĕссипе, çын çинчен тиркесе калаçмастчĕ вăл. Хăй аслă пĕлӳ илейменшĕн ӳпкелешетчĕ. Зоя Никифоровнăпа виçĕ ывăл пăхса çитĕнтерчĕç. Сад пахчи ӳстерчĕ. Пахча хыçĕнчи пысăк çырмана малалла çурăласран темиçе машина тăпрапа пӳлсе хучĕ. Унта хăй аллипе çĕр-çĕр йывăç лартрĕ. Чăн-чăн çут çанталăк тусĕ! Аслă Çĕнтерӳ 30 çул тултарнă ятпа Сергей Лазо урамĕнчи çурчĕ умĕнче те йывăçсем лартса сквер турĕ.

Кампа кăна туслă пулман-ши, кама кăна ырă туман-ши çак ăста? Вăтăр пилĕк çул ытла ĕçлерĕ вăл район хаçатĕнче. Тепĕр чухне хаçат кăлармашкăн хут пĕтме пуçласан Кронид Прокопьев тӳрех Чул хулана тухса каятчĕ, пилĕк-ултă рулон турттарса килетчĕ. Пултарнă вĕт! Хăй ĕçрен кайиччен редакцири журналистсене пурне те фотоаппаратпа усă курма вĕрентсе хăварнă. Игорь Васильев, Ирина Никитина тата Раиса Петрова çак ĕçе пĕр уйăхра хăнăхса çитни çинчен савăнса калаçатчĕ. Вăл кайнă хыççăн редакцире фотокорреспондент штатне те пĕтерчĕç.

Кронид Прокопьевич 2003 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ. Йывăр тăпри çăмăл пултăр. Эпĕ хамăн пĕчĕк хайлавра Кронид Прокопьевăн пултарулăхĕпе ĕç-хĕлне пăхса тухма тĕллев лартман. Унăн пултарулăхĕ тахçанах тĕплĕ тĕпчеве тивĕç. Хальхи фотожурналистсем çинчен те пачах çырмастпăр.Те манатпăр вĕсене, те хисеплеместпĕр. Вĕсем культурăпа искусство çыннисемех вĕт-ха. Тата мĕнлерех хастар ĕçченсем.

■ **Герман ЖЕЛТУХИН**

*Следстви*

## Налук тӳлемен

***Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕпчекен пайĕ Çĕмĕрлери «Молочное дело» ООО директорĕ тата тĕп бухгалтерĕ пулнăскерсем тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ. Сăмах ушкăн каварлашса уйрăмах пысăк виçепе налук тӳлессинчен пăрăнни пирки пырать.***

Следстви версийĕ çапларах: 2011 çулхи кăрлачран тытăнса 2012 çулхи пуш уйăхĕччен директорпа тĕп бухгалтер калаçса татăлса тулли мар яваплă общество 2011 çулшăн хушма хакран илекен налука тӳлессинчен пăрăннă. 34,6 млн тенкĕ ытла тӳлеменмĕн. Налукран пăрăнас тĕллевпе темиçе контрагентпа финанспа хуçалăх операцийĕсем тунине çирĕплетекен суя документсемпе усă курнă. Çав фирмăсен штатĕнче пĕрер çын кăна пулнă, вĕсем нимĕнле ĕç те пурнăçламан, чăннипе, налук тӳлессинчен пăрăнмалли саккунсăр схемăна ĕçе кĕртмелли сыпăксем кăна пулнă.

Следстви шухăшĕпе – айăпа ĕнентермешкĕн материал çителĕклĕ, çавна май уголовлă ĕçе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетмешкĕн прокурора панă.

Çакна та палăртмалла: сиене саплаштарма май пултăр тесе следователь ыйтнипе суд «Молочное дело» экс-директорĕн моторлă киммине, «Тойота» автомобильне, мотоциклне, гараж боксĕн, çĕр лаптăкĕсен тата пурăнмалли çурчĕн унăн харпăрлăхĕнчи пайĕсене, çавăн пекех мăшăрĕн катерне арестленĕ. Следстви пысăк ĕç пурнăçлани куç кĕрет: налук, почерк экспертизисем ирттерме тивнĕ, 50 ытла свидетеле допрос тунă.

**К.НИКОЛАЕВ.**

## Фестивальте – вожатăйсем

***"Утес" санаторире пултаруллă вожатăйсен республика фестивалĕ иртнĕ. Унта Чăваш Енри сиплев лагерĕсенче ĕçлекенсем хутшăннă.***

ЧР Çамрăксен пуçарулăх центрĕ тата "РФ Студентсен отрячĕсем" общество организацийĕн регионти уйрăмĕ пуçарнă конкурсра вожатăйсен тĕрлĕ енлĕ ăсталăхне тĕрĕсленĕ: çамрăк педагогсем ташланă-юрланă, видеокăларăмсем кăтартнă, тĕрлĕ вăйăра тупăшнă. Çĕнтерӳçĕсене тĕрлĕ номинацире палăртнă. Фестиваль пĕтĕмлетĕвĕпе "Ылтăн пучах" лагерĕн отрячĕ, "Росинка" сиплев центрĕн вожатăйĕсем тата "Шурă чулсем" спорт комплексĕн хастарĕсем мала тухнă. Ташлас енĕпе "Хум" лагерь ушкăнĕ пуриччен пултаруллăрах пулнă, ӳнер ăстисен конкурсĕнче студентсен "Пилĕкмĕш чĕрĕк" отрячĕ /"Шурă чулсем" спорт комплексĕ/ палăрнă. "Çăлтăрсем" ача-пăча лагерĕнче ĕçлекен Александра Короткая жюрин ятарлă парнине тивĕçнĕ. Куракансем килĕштернĕ вожатăй – акробатика этючĕпе тĕлĕнтернĕ Дмитрий Осипов /"Салют"/ .

**Е.АНДРЕЕВ.**

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

www.profilch.ru
ПРОФНАСТИЛ
СОБСТВЕННОЕ ПРОИЗВОДСТВО
ангары,
КОМПЛЕКТУЮЩИЕ ДЛЯ КРОВЛИ, ВОДОСТОКИ, ДЫМНИКИ
МОНТАЖ ЗАБОРОВ
тел. (8352) 22-95-45, 63-82-85

БЕТОН всех марок
(М-200 - 2900 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ
(КБ-20 - 33 руб./шт)
ДОСТАВКА
тел.: 29-25-34, 29-24-88



СТРОИТЕЛЬНАЯ КОМПАНИЯ
ЦЕНТР
БЕТОН
РАСТВОР
ДОСТАВКА
г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7
(8352) 76-56-00, 63-80-08

ООО"Мобильный бетон"
БЕТОН
РАСТВОР



ДОСТАВКА
г. Чебоксары,Эгерский б-р,49
(8352) 51-22-27, 67-73-57

## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Тел. 8-917-066-41-46.

**508.Ĕне.** Т. 8/83533/ 6-04-19.

## УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 89603021293.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**250.Кровельные, фасадные работы**. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

**346.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 364060.

**359.Бурение колодцев. Продажа** колодезных колец. Доставка и установка. Т. 89033790901.

**416.Экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**456.Услуги КаМАЗа**-55102, **ф/погрузчика. Доставка** песка, щебня, кирпича, гравмассы. Сертифицированы. Т. 8-903-389-30-39.

**459.Установка** заборов, ворот, винтовых свай. Т. 8-917-650-06-40.

**460.Обшивка** домов сайдингом, **утепление.** Т. 8-902-287-27-77.

**462.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 8-906-387-13-63.

**499.Бурение скважин** на воду. Т.: 8-905-198-03-33, 8-987-674-00-30.

**514.Печник** с опытом кладки **каминов, барбекю.** Т. 8-937-392-10-07.

**Раççей Федерацийĕн "Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен" саккунĕн 5 статйипе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Судьясен квалификаци коллегийĕ Шупашкар хулинчи Ленин районĕн сучĕн судйин вакантлă должноçĕ уçăлни çинчен пĕлтерет.**

**Раççей Федерацийĕн "Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен" саккунĕн 5 статйин 6 пунктĕнче кăтартнă тивĕçлĕ документсемпе заявленисене 2014 çулхи çурла уйăхĕн 25-мĕшĕччен ĕç кунĕсенче 8-тан пуçласа 12 сехетчен тата 13-рен пуçласа 17 сехетчен, çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12 çурт, 302 пӳлĕм.**

**Заявленисене хăçан тата ăçта пăхса тухассине претендентсене çирĕплетнĕ йĕркепе пĕлтерĕç.**

Администрация Чебоксарского района извещает о намерении продлить срок аренды земельных участков площадью 0,6668 га с кадастровым номером 21:21:000000:5807 и 0,1330 га с кадастровым номером 21:21:102402:220, расположенных по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Вурман-Сюктерское сельское поселение, под строительство объекта Волоконно-оптическая линия связи "Муфта 20_11 Малый Сундырь-БС 21103 Большой Сундырь-Козьмодемьянск". Контактная информация по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15 (каб. 20). Телефон для справок (8-83540) 2-40-82.

Постоянно действующая комиссия по приватизации муниципального имущества Шумерлинского района сообщает об итогах открытого по составу и форме подачи предложений по цене аукциона по продаже имущества, прошедшего 11.07.2014:

Лот № 1 - Нежилые помещения общей площадью 1382,6 кв.м.: подвальный этаж - №№1 - 15; 1 этаж - №№1 - 15, 17, 19 - 25; 2 этаж - №№1 - 16, инвентарный номер Р23/10-1242-2, расположенные по адресу: Чувашская Республика, Шумерлинский район, с. Ходары, ул. Садовая, д. 17. Цена сделки - 434700 руб. (Четыреста тридцать четыре тысячи семьсот руб.). Покупатель Гусева Галина Александровна.

Ядринская районная администрация Чувашской Республики согласно постановлению № 561 от 15.07.2014 г. в 10-00 часов 26 августа 2014 г. проводит открытый аукцион по продаже земельного участка категории "земли сельскохозяйственного назначения":

Лот 1. В собственность за плату для ведения сельскохозяйственного производства, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, с/пос. Большесундырское, с кадастровым номером 21:24:180302:557, площадью 22000 кв.м.; начальная цена 17160 руб.

Последний срок приема заявок 22.08.2014 г. Оформление заявок и дополнительная информация по адресу: г. Ядрин, ул. 30 лет Победы, д. 1, каб. 215, тел. (883547)22-4-33 и на официальном сайте Ядринского района www.yadrin.cap.ru в разделе объявления.

## П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.Песок,** гравмассу, чернозём, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **навоз, чернозём.** Дёшево. Д-ка. Т. 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём.** Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 8-961-339-33-63.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, бой кирпича.** Д-ка. Т. 8-903-322-57-66.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 89022881447, 38-75-74, metalservis21.ru

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: **89176529694, 8-927-667-95-88.**

**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**28.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 8-937-010-10-54.**

**30.ОКНА** от 4200 р.; **ДВЕРИ стальные** от 8900 р. Акция действует до конца месяца. Звоните по тел. **8-937-954-92-45.**

**33.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 8-967-470-27-36.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 89876664140, 89370100141.

**46.БРУСЧАТКУ, тротуарные плиты** – дёшево. Т. 8-903-358-77-72.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 89033891400.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. **Т. 89379528467,** Владимир.

**79. Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**124.Песок,** щебень, **гравмассу,** керамзит, **торф,** кирп. бой, **цемент.** Т. 89033220479, 48-04-79.

**128.Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**221.Профнастил, металлочерепицу, водостоки,** металлосайдинг. Доставка. Замер. Строительство. Т. 89196534368.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 8-937-391-86-48, 8-927-853-57-32.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит,** песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**294.Песок, гравмассу,** щебень, бой кирпича. **Услуги КамАЗа.** Тел. 8-905-341-91-46.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, бой кирпича, **навоз.** Доставка. Т. 89051974019.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 89613409305.

**355.Песок, гравмассу, щебень.** Доставка. Т. 89053479783.

**390.Блоки, кирпич** красный, силикатный; **гравмассу,** песок, **керамзит, кольца.** Т. 89278629166.

**415.Кольца колодезные** от производителя. Д-ка. Т. 89278416247.

**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – **недорого.** Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**464.Косилки, грабли, окучники,** пресс-подборщики, картофелекопалки. Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

**476.**Новые **дизельные мини-тракторы.** Тел. 8-927-667-97-98.

**518.Гравмассу, щебень, песок** речной, карьерный; **чернозём,** глину. Д-ка. Т. 8-952-026-99-54.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**385.Требуются плотники.** Т. 483900.

**368.Требуются:** сварщики, монолитчики, арматурщики, монтажники, плотники, разнорабочие, каменщики. Проживание, питание предоставляется. Оформление по ТК, соцпакет. Тел.: **8/8352/ 21-51-90, 37-85-75** /"АльянсГрупп"/.

**515.В Москву** срочно требуются **мастера отделочных работ.** З/п от 50000 р., жильё питание /ООО "СТС"/. Т. 8-963-770-99-62.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т.8-960-310-98-78.

**433.КОРОВ.** Т. 8-927-850-85-64.

**452.ДОМ с участком** в любом состоянии. Тел. 89603008787.

**474.Дом или участок.** Т. 41-38-16.

**475.Спецтехнику.** Т. 41-38-16.

## Спорт

# Шупашкарта – Раççей кубокĕ

***Кăçалхи авăн уйăхĕн вĕçĕнче Шупашкарта кире пуканĕ йăтассипе çĕр-шыв кубокне çĕнсе илессишĕн пысăк турнир иртĕ.***


Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

РФ Спорт министерстви ăмăртусен тĕп судйи пулма Санкт-Петербургра пурăнакан пирĕн мухтавлă ентеше, тĕнче тата Европа чемпионĕн ятне темиçе хутчен çĕнсе илнĕ Сергей Кириллова çирĕплетнĕ. Яваплă çак ăмăртусен йĕркелӳ комитетне ертсе пыма ЧР Патшалăх Канашĕн Председательне, РФ спорт мастерне Юрий Попова шаннă.

Ĕнер Юрий Алексеевич йĕркелӳ комитечĕн пĕрремĕш ларăвне ирттерчĕ. Ларура çавăн пекех ЧР физкультурăпа спорт министрĕн çумĕ Сергей Шелтуков, Шупашкар хула администрацийĕн физкультурăпа спорт управленийĕн ертӳçи Александр Малов, кире пуканĕ спорчĕн Чăваш Енри федерацийĕн президенчĕ Юрий Карпов, «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕн çумĕ Михаил Арланов, ĕçпе спорт ветеранĕсем Петр Сидоровпа Зинон Иванов сăмах каларĕç. Вĕсем тĕрлĕ ыйту çинче чарăнса тăчĕç, усăллă сĕнӳсем пачĕç.

**Петр СИДОРОВ.**

## Çĕнĕ кĕнеке

# Кăмпа пухма кайрăм та...

***«Хам та ăнланмастăп: ăçтан, епле майпа сăвă йĕркисем çуралаççĕ?» – чунне уçать Светлана Гордеева поэт. Нумаях пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче унăн «Карçинккари кăмпасем» сăвă кĕнеки вырăсла тата чăвашла /Валерий Кошкин поэт куçарнă/ пичетленсе тухрĕ.***

**– Çиме юрăхлă тата наркăмăшлă кăмпа çинчен ачасем валли сăвă çырас шухăш епле çуралчĕ-ха? – кăсăклантăм авторпа тĕл пулсан.**

– Иртнĕ кĕркунне вăрманта кăмпа шыраса çӳренĕ чухне сисмесĕрех çуралчĕç пĕрремĕш йĕркесем. Кайрĕ вара... Сăмах хыççăн сăмах, йĕрке хыççăн йĕрке... Çапла вара вăрмантан кăмпа пухса çеç мар, сăвăсемпе пуянланса таврăнтăм.

**– Кăмпа пухма питĕ юрататăр пулас. Шлепкеллĕскерсене пурне те паллатăр-и?**

– Чи юратнă ĕçсенчен пĕри вăл маншăн. Анчах шел те, юлашки çулсенче вăхăт сахалрах. Кăмпа пухасси – аттен чун киленĕçĕ те. Вăл мана пилĕк çулта чухнех хăйпе пĕрле вăрмана илсе çӳреме пуçланă. Йывăççен хушшипе вун-вун çухрăм утсан та пĕрре те найкăшман, ывăннине, йăлăхнине туйман. Кăмпасене уйăрма та аттех вĕрентрĕ. Вăрманта мана питĕ интереслĕ. Тĕлĕнтермĕш тĕнче пек туйăнать вăл мана: унта йывăç та, чечек те – пурте чĕрĕ.



Пăрмаях пуçа вататăп: ачасене кăмпасене паллама епле вĕрентмелле-ши? Вĕсен ячĕсене пĕлеççĕ-и вĕсем? Манăн шухăшăмпа – ача пĕчĕк чухнех çут çанталăкпа туслашмасан ăна ĕмĕр тăршшĕпех тем çитмен пек туйăнĕ. Шайлашулăх çукки темелле-ши? Çапла вара пĕчĕк вулакан валли кăмпасем пирки кĕнеке хатĕрлес шухăш çуралчĕ.

**– Кĕнекене ӳкерчĕксемпе илемлетекенĕ кам?**

– Ӳкерчĕксене те хамах турăм.




Малтан çут çанталăкри пек, чăнчăнни евĕр, ӳкертĕм. Ачасем вĕсене вăрманта курсан тӳрех палласа илме пултарччăр. Кĕнеке пĕчĕккисене илĕрттĕр тесе кайран кăмпасене юмахри сăнарсем пек евĕрлерĕм. Акă хурăн кăмпи, сăмахран, мунчара хурăн милĕкĕпе çапăнать, сарă хыр кăмпи хĕвел айĕнче хĕртĕнет. Çамрăк вулакана сăвăсен пуххи килĕшессе, ашшĕ-амăшĕпе пĕрле кĕнекере паллашнă кăмпасене шырама вăрмана каясса шанатăп.

**И.СЕРГЕЕВА.**

## Мĕншĕн çапла калатпăр

# Тутарла “пине” мĕн теççĕ

Пирĕн тăрăхра – Тăхăрьял енче – пысăккисем те, пĕчĕккисемпе те тупмалли-сутмалли юмах яма юратаççĕ. Ачасем йĕркерен ларса тухнă та ертсе пыраканĕн ыйтăвне кĕтеççĕ. Чиперех хуравлаççĕ шăпăрлансем ыйтусене. Вĕсен хушшинче вăйăйа пуçласа хутшăнакансем те пур. Кивĕ юмахсен тупсăмĕсене чылайăшĕ лайăххах ас туса юлнă.

Ертсе пыраканĕ – вăйă пуçлăхĕ – кĕтмен çĕртен ачасене халĕччен илтмен ыйту парать: "Тутарсем "пине" мĕн теççĕ?" – тет. Ушкăнти ачасенчен хуравне никам та пĕлмест-çке. Хурав пама черет çитнĕ ача та аптăраса ӳкет. Вара вăйă ертӳçи: "Мĕн теççĕ, мĕн теççĕ. Çавна та ăнкарса илейместĕр-и? Тутарсем "пин" хисепе шăпах "мĕн" тесе калаççĕ", – тет. Халĕ сана пĕлейменшĕн сутатпăр. Кама иккенне хăвăр пĕлĕр тет те вăрттăн пăшăл-пăшăл пăтти туса илеççĕ. Кайран паллă пулать: айăплине леш касри ватăлса çитнĕ карчăка качча илсе параççĕ иккен, хĕр ача пулсан курпунĕ тухнă мучие качча памалла-мĕн. Нимĕн те калаймăн: кашни вăйă мĕн енĕпе те пулин ăс парать, ас туса юлма хистет.

**Роман ЧЕПУНОВ.**

# Гороскоп

***Утă, 21-27***

**Сурăх.** Кулленхи пурнăçа уява çавăрма тăрăшăр. Тусăрсемпе кафере шăкăл-шăкăл калаçса ларăр /тунти кун/, юратнă çыннăрпа театра çитсе килĕр /ытлари кун/, хăвăр валли капăр тум туянăр /юн кун/, ĕçтешĕрсемпе кану çуртневаскăр /эрне кун/, ачасемпе цирка кайăр /шăмат кун/. Кăмăлăр яланах çĕкленӳллĕ пулĕ.

**Вăкăр.** Кăмăлăр пĕрешкел мар: хавасланатăр кăна – сехетренех куççульленетĕр, йăл кулма тытăнатăр çеç – пăшăрханатăр та... Юлташăрсене, ĕçтешĕрсене сирĕнпе пĕр сăмах тупма çăмăл пулмĕ. Юн кун хăвăра алăра çирĕп тытаятăр, çапах япăх вĕçленекен кинофильмсем курас килĕ. Юратнă çыннăр тĕл пулăва йыхравлать тĕк – турткалашса ан тăрăр.

**Йĕкĕреш.** Пуç çĕклемесĕр ĕçлетĕр, канма та пĕлместĕр. Çăлтăрсем сире ку эрнере тумалли ĕçсене малтанах палăртма сĕнеççĕ, çапла майпа вăхăта перекетлеме май пулĕ. Çĕнĕ проекта пурнăçлама тытăнăр /тунти кун/, йывăрлăхсене пăшăрханмасăр парăнтарăр /кĕçнерни кун/, çивĕч ыйтусене те çывăха ан илĕр /эрне кун/ – вĕсене шӳтле-шӳтле уçăмлатăр.

**Рак.** Юрату туйăмĕпе çунатланатăр, çавăнпах ĕçре йăнăшас хăрушлăх пысăк. Пуçлăхăр шанчăкĕнчен тухас мар тесен тунти кун савнийĕрпе ан тĕл пулăр, ытлари кунхи пухăва хатĕрленĕр. Юн кун алла-аллăн тытăнса çĕрлеччен çӳресен те кĕçнерни кунхи ĕçлĕ тĕл пулăва вăхăтра çитĕр.

**Арăслан.** Палăртнине пурнăçлайманнишĕнех пăшăрханатăр, эрнен пĕрремĕш çурринче вĕчĕрхенетĕр те. Ăшра капланнине çывăх çыннăрсене ан кăтартăр /тунти кун/ – вĕсем айăплă мар. Ĕçтешĕрсене айăплани те ытлашши /ытлари кун/. Иртен-çӳренпе ан харкашăр /юн кун/, юратнă çыннăрпа ан тавлашăр /шăмат кун/ – çăвара шыв сыпни чылай усăллăрах.

**Хĕр.** Ĕçре, чăннипех те, лару-тăру çăмăл мар. Сиксе тухнă ыйтусене васкаса татса пама ан тăрăшăр, вăхăта çемьепе ирттерĕр /тунти кун, шăмат кунпа вырсарни кун/, юлташăрсемпе шашлăка кайса килĕр /кĕçнерни кун/, киленĕç кӳрекен ĕçĕрпе аппаланăр /эрне кун/... Шăмат кун каçхине хăна пухма та юрать.

**Тараса.** Юлташăрсем сире кĕтменлĕхпе савăнтарĕç /ахăртнех, тунти кун/. Ытлари кун вара хăвăр кама та пулин парнепе хавхалантаратăр. Шел те, юн кунпа кĕçнерни кун самаях тăкакланма тивĕ. Ан пăшăрханăр: эрне кунах енчĕкĕре укçа кĕрĕ. Канмалли кунсене юратнă çыннăрпа ирттеретĕр. Ăçта каясси пирки халех шухăшлăр.

**Скорпион.** Пысăк проекта пурнăçа кĕртесси пирки шухăшлатăр-и? Апла пулсан çак кунсенчех ĕçе пуçăнăр. Сăмах май, сире никам та чăрмав кӳмĕ. Ытлари кунпа эрне куна тĕл пулусем ирттерме палăртăр. Ĕлкĕреймесен канмалли кунсенче те ĕçе тухăр.

**Ухăçă.** Чи пĕлтерĕшли – тĕрĕс йышăну туни. Сывлăхăр пăшăрхантарать-и? Тухтăрпа канашлăр – вăл сире пулăшĕ /тунти кун/. Çывăх çыннăрсене тутлă кукăль пĕçерсе савăнтарăр /юн кун/. Тĕплĕ шухăшласан пурнăçри чи кăткăс ыйтусенчен пĕрин хуравне те тупаятăр /кĕçнерни кун/.

**Ту качаки.** Ĕç пирки çеç шухăшлатăр тейĕн. Çăлтăрсем те унччен пуçăннисене вĕçне çитерме /тунти кунпа ытлари кун/, çĕннисене пуçăнма /кĕçнерни кун/ сĕнеççĕ. Унсăр пуçне юлташăра пулăшма шантарнăччĕ – манман-и? Канмалли кунсенче пахчара ĕçлĕр.

**Шыв тăкан.** Ĕç-пуç аванах йĕркеленсе пырсан та Шыв тăкансем тунсăхлаççĕ. Кăмăлăра çĕклеме вăхăт: ырă чунлă çынсемпе паллашăр /тунти кунпа эрне кун/, юлташăрсемпе тĕл пулăр /юн кун/, прическа улăштарăр /кĕçнерни кун/. Канмалли кунсенче çывăх çыннăрпа ăçта та пулин каймашкăн палăртăр.

**Пулăсем.** Пулăсемшĕн ку эрне çав тери пĕлтерĕшлĕ. Пурнăçăрта пысăк улшăнусем пулаççĕ. Сăмах май, пурте лайăх еннелле мар. Ытлари кунпа юн кун уйрăмах асăрхануллă пулăр – кăткăс ыйтусене хыпаланса ан хуравлăр. Кĕçнерни кун пултарулăхăра туллин кăтартма, эрне кун ăшă кăмăллă çынпа паллашма май пулĕ.

## Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 19.07 | + 22 | + 12 |
| 20.07 | + 20 | + 12 |
| 21.07 | + 20 | + 10 |
| 22.07 | + 21 | + 13 |
| 23.07 | + 23 | + 15 |
| 24.07 | + 22 | + 14 |
| 25.07 | + 21 | + 13 |

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун”– 78353

Директоршăн-тĕп редакторшăн М.М.АРЛАНОВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор И.Н.КЛЕМЕНТЬЕВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “Хыпар”.

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13.
56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă”** рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Номере 18.07.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8593. Заказ 2657.

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.